# ЧР Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев черетлĕ пресс-конференцире журналистсен ыйтăвĕсене уççăн хуравларĕ
• 2 стр.

ХЫПАР

1997 çулхи кăрлачăн 30-мĕшĕнче тухма пуçланă

*Анне, аппа та йăмăк, мăшăр... Эсир пуртан кил-çуртăм ăшă*

# Чăваш ХĔРАРĂМĔ

32 (850) №, 2014, çурла, 9

Хакĕ ирĕклĕ.

16+

Хаçата электрон адреспа та çыру çырма пултаратăр: zuwxeraram@mail.ru.

**Больницăри йĕркесĕрлĕх, черет çав-çавах хăратать.** 3 стр.

**Тăлăхсене пурăнмалли кĕтеспе тивĕçтересси каллех вырăнти влаçа пула чăхăмлать.** 4 стр.

**Сăваплă вырăн республика тулашĕнче пурăнакансене те илĕртет.** 5 стр.

**Ĕлĕк тарçăсем кăна çинĕ çарăк паян деликатеса çаврăннă.** 8 стр.

**Юратуран... тепĕр юрату кăна сиплет.** 9 стр.

**Шухăшсем шурă парăс караççĕ.** 10 стр.

**Чăтлăхри тискер кайăкпа сукмак хĕресленсен...** 11 стр.




# Ял-йышран ан юл, ялан пĕрле пул

**Пушкăртра Михаил Егорова «Мичурин» теççĕ. Сад ĕçне юратнăшăн хисеплесе çакнашкал хушма ят панă ăна ял-йыш. Сакăр вуннăри арçын хапха алăкне уçнине илтсе нӳхрепрен васкаса тухрĕ. Унта юсав ĕçĕсем пуçланă иккен. Унтан пахча картине çĕнетесшĕн вăл.**

**Егоровсем кĕлет умне мăн çын чышки пысăкăш сухан типĕтме хунă. Туранă пан улми хĕвел çинче кушăхса выртать. Картишĕнче тем тĕрлĕ чечек шăрши сарăлнă. «Телевизор курса ларма хăнăхман. Ĕç чуна йăпатать», – йăл кулă çиçет вĕсен питĕнче.**

**Михаил Егоровичпа Зоя Егоровна – мăшăр кăвакарчăн пекех. Кирек хăш ĕçе те пĕрле пуçăнаççĕ. Тăрăшнине кура пахча çимĕç те, улма-çырла та ăнса пулать вĕсен. Çулсеренех арпуспа дыня лартаççĕ. Кăнтăр çимĕçĕсем кĕçех пиçсе те çитĕç. «Малтан витмелле. Кайран çĕресрен айне улăм хумалла», – вĕрентеççĕ çĕр ĕçне парăннăскерсем. Арăмĕпе упăшки темиçе вырăнта исĕм çырли лартнă. Тĕмсем 3-4 çултанах çимĕç пама пуçланă.**

## Хуларан – яла

Егоровсем 2001 çулта Шупашкартан Пушкăрта куçнă. Хулара иккĕшĕ те строительте ĕçленĕ. Тĕрĕссипе, çак профессие суйланиех паллаштарнă каччăпа хĕре. Опытлă çемье пуçĕ министерствăра пай пуçлăхĕн пуканне йышăннă.

«Яла килнĕренпе 100 ытла çыннăн сад пахчинчи улмуççисене сыпрăм. Ку ĕç патне ал пырать. Çавăнпа пулăшмашкăн чĕнеççĕ те мана», – калаçăва пуçлать Михаил Егорович.

Хăй вăхăтĕнче ку килте пĕр улмуççи анчах çимĕç панă. Вăл та пулин чирлеме пуçланă. Анчах сад ăсти ăна типсе хăрма паман. Йывăç çаплипех сĕтеклĕ пан улмине ас тивсе пăхтарасшăн.

Егоровсем кролик ĕрчетме ӳркенмеççĕ. Чĕр чуна ирĕке кăларса чуптараççĕ. Техника ăслăлăхĕсен кандидачĕ Леонид Борисов парнеленĕ кролик çурисем хăвăртах çитĕнеççĕ-мĕн.

Пушкăрт халăхĕ мĕн ĕлĕкрен пыл хурчĕсемпе аппаланать. Чылайăшĕ килте те, вăрманта та вĕлле лартса тултарнă. Çавăнпах ял уявне те пыл сăпасĕнче паллă тăваççĕ вĕсем.

*Тӳрĕ калакан тăванне юрайман.*
Каларăш.

## Çанталăк



| | кăнтăрла | çĕрле |
|---|---|---|
| 09.08 | +25 | +18 |
| 10.08 | +24 | +18 |
| 11.08 | +25 | +15 |
| 12.08 | +22 | +12 |
| 13.08 | +22 | +12 |
| 14.08 | +23 | +16 |
| 15.08 | +18 | +14 |

# Ыранхи куна шанăçпа кĕтер

**Паянхи тĕнче – пĕрлехи чĕрĕ организм: пĕр кĕтесре сиксе тухнă вут-кăвар ыттисене пырса тивмĕ тесе никам та шантараймĕ. Раççейĕн Украина тĕлĕшпе тытса пыракан политикине сивлесе Анăç пирĕн çĕр-шыва тĕрлĕ санкципе хупăрлама тăчĕ. Мĕнех, патшалăха пур енĕпе те хăрушсăрлăхпа тивĕçтермелле. Çакна шута илсе Раççей Президенчĕ Владимир Путин çурла уйăхĕн 6-мĕшĕнче ятарлă хушăва алă пуснă. Унпа килĕшӳллĕн Раççее Австралирен, Канадăран, Европĕрлĕхрен, АПШран, Норвегирен ĕне, сысна, чăх-чĕп какайне, пулă, сыр, сĕт-çу, улма-çырлапа пахча çимĕç илсе кĕме чарнă. Чару çулталăк тăсăлĕ. Чăн та, çынсем ача-пăча çимĕçĕ тата çӳлерех асăннă продукцие хăйсене усă курмашкăн чикĕ урлă илсе каçма пултараççĕ. ЧР Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев çулсерен çурла уйăхĕнче ирттерекен пресс-конференцире те çакăн тавра сăмах хускалчĕ. Ку тĕп ыйтусенчен пĕри пулса тăчĕ теме çук – калаçмалли хамăрăн та çителĕклĕ. Анчах та хĕрӳ вырăнта лару-тăру хĕрсех пынине асăрхамăш туса иртеймĕн. Пушшех те – Чăваш Ене Украинăран беженецсем килсех тăраççĕ. Правительство уйăрнă квотăпа килĕшӳллĕн те, кунта пурăнакан тăванĕсем патне те. Çапах кашни медалĕнех икĕ енĕ те пур. Анăç санкцийĕсем тата вĕсене пула Раççей йышăннă чарусем хамăрăн предпринимательсен – чăваш хресченĕн тесе вула – аллисене пушатаççĕ кăна: чикĕ леш енчен продукци кӳрсе килме пăрахнипе усă курса хамăр çĕр çинче туса-ӳстерсе илнине тупăшлă вырнаçтарма шăпах меллĕ пулĕ. Пуçлăх пуçĕ çине тăкăнакан ыйтусен хушшинче шăпах çакăн пекки те пулчĕ – анчах та хамăрăн продукци çителĕклĕ-и-ха? Чăвашăн кăнтăр районĕсенче акă кăçал çумăр çуманпа пĕрех…**



## Кĕлетсем тырăпа тулĕç-и?

– Тулĕç, – пĕр иккĕленмесĕр хуравларĕ Михаил Васильевич. – Тĕш тырă, выльăх апачĕ пĕлтĕрхинчен ытларах пулмалла, çĕр улми те тухăçĕпе савăнтарасса кĕтетпĕр. Çавна пула 2015-16 çулсем валли çирĕп никĕс хывасси иккĕлентермест. Ял хуçалăх продукцийĕ тĕлĕшпе хаксем лайăх, сĕтсĕр пуçне /ку енĕпе те ĕçленине палăртрĕ Михаил Игнатьев. – М.И./. Çав вăхăтрах ял тăрăхĕсенче çамрăксем ĕçе явăçни, фермер хуçалăхĕсем йĕркелени савăнтарать. Паян ялта та тупăшлă ĕçлеме пулать.

Ял пирки сăмах хускатнă май çулсем пирки те каласа кăтартма ыйтрĕç МИХсен ĕçченĕсем. Халĕ, чăн та, хуларинчен начар мар пурăнать хресчен, тен, лайăхрах та. Çавна май тирпей-илем кӳрес ĕç тепĕр чух манăçа тухать. Калăпăр, анлă çулсен хĕррипе совет тапхăрĕнчи "палăксем" тавралăха сăнсăрлатса лараççĕ. Вĕсемпе мĕн тумалла?

Яллă вырăнти çулсемпе ытти регионсем пекех ĕçленине палăртрĕ Михаил Васильевич. Чăн та, ку енĕпе ыттисенчен лайăхрах та пирĕн лару-тăру. Колхозсем арканнă хыççăн юхăнса ларакан выльăх-чĕрлĕх капашсăр пысăк комплексĕсен тĕлĕшпе вара, чăн та, ыйтăва татса памалла. Унта ĕçе çĕнĕрен йĕркелемешкĕн пур май та çителĕклĕ. Шыв пăрăхĕсем те, ытти оборудовани те сыхланса юлнă тăк çак çуртсене ял тăрăхĕсен администрацийĕсен суд урлă хăйсен харпăрлăхне куçарса фермерсене сутмалла. Ишĕлсе анас патне çитнисене, паллах, сӳтмелле. Михаил Игнатьев ку ыйтăва республика юбилейлă çуралнă кунĕ тĕлне йăлт татса пама шантарчĕ.

Ял тенĕрен, патшалăх служащийĕсем тăратнă декларацирен Михаил Васильевичăн хăйĕн те çĕр лаптăкĕ нумайăйи паллă. Нивушлĕ çĕр çинче ĕçлеме те вăхăт тупать? "Çапла, атте-аннерен еткерлĕхе юлнă 50 сотка пур – унпа тивĕçлĕ канăва тухнă аппа усă курать. Шупашкар районĕнчи Янăшра пирĕн çемьен çурт пур, ун çумĕнче – 26 сотка. Ачасем çăвĕпех – унта. Ĕç енĕпе воспитани пани пăсăк мар. Лавккара пахча çимĕç нимĕн те туянмастпăр – йăлтах хамăрăн. Сутмалăх та юлать. Унсăр пуçне Раççей саккунĕпе килĕшӳллĕн çĕр пайланă чух мăшăра ял хуçалăх пĕлтерĕшлĕ 2,5 гектар, мана 5 тивĕçнĕччĕ. Унта ĕçлемешкĕн вăхăт çук. Вăл лаптăксене тара паратпăр", – рапортланă пекех илтĕнчĕç Пуçлăх сăмахĕсем.

## Политика, промышленноç, экономика, экологи

Хĕвел модулĕсен завочĕ те кăсăклантарать журналистсене. Çĕнĕ Шупашкарта вырнаçнă завод ыран тесен ыран алăкне уçма пултарать-мĕн.

Китайра туса кăларакан япаласем, улшуçсем илсе килсе пасарта сутаканскерсем, начар пахалăхĕпе хăратса çитернĕ те пире, Михаил Васильевич стереотипсенчен хăтăлма сĕнчĕ. Китай паян – тĕнчери хăватлăн аталанакан иккĕмĕш çĕр-шыв. Вĕсемпе туслă çыхăну тытни хамăршăнах усăллă пулĕ.

Атăл леш енчи тăрăх аталанăвĕпе кăсăкланчĕç те – ку йăлтах газ кĕртессипе çыхăннă. "Газпром" обществăна проектпа смета документацийĕ тăратнă. Газпа 2016 çулта усă курма пуçлас шанăç пур. Чăн та, палăртнине республика бюджетĕнчен 1 пус тăкакламасăрах пурнăçа кĕртĕç. Çапла Атăл леш енче туризма аталантарма, сывлăха çирĕплетме майсем ытларах пулĕç.

Çу варринче чечекленме пуçлакан мăнаçлă Атăл – чăвашăн чун ыратăвĕ: шыва кĕрсе те, пулă тытса та тăраниччен савăнмашкăн май çук. Ку ыйтăва влаç сунтăха чиксе хуман. Проекта пĕçерсе çитерме тавăрса панă – çавă çеç. Ыйтăвĕ экологи, транспорт, энерги енчен питех те пĕлтерĕшлĕ, çавăнпа Чăваш Ен правительстви ку енĕпе малашне те ĕçлĕ.

"Районсене тухса çӳренĕ май халăх пĕр ыйтусенех парать-и е вĕсем çултан çул улшăнсах пыраççĕ-и?" – кăсăкланчĕç журналистсем.

> ### ЦИФРĂСЕМПЕ ФАКТСЕМ
>
> **Тĕрĕссипе, 4 çул каялла мĕнле тĕллевсемпе пуçăннă ĕçе, паян та çав çултан пăрăнманнине палăртрĕ Михаил Игнатьев. Чăваш Ен халăхĕн пурнăç шайне ӳстересси, пурăнма, ĕçлеме хăтлă условисемпе тивĕçтерессси. Çынсем ыранхи куна шанăçпа кĕтчĕр.**
>
> **Çак тĕллевсене пурнăçа кĕртес енĕпе нумай ĕçленĕ. Этем, ача, предпринимательсен прависене хӳтĕлекен уполномоченнăйсен институчĕ йĕркеленĕ республикăра. Министерствăсем отчет тусах тăраççĕ. Влаç органĕсен çумĕнче общество канашĕсем ĕçлеççĕ. "Çак çул тĕрĕс, идеал шайĕнче", – тесе тĕллесе кăтартакан çук, анчах та лайăххи патне туртăнмалла. Тĕллевсем те 4 çулта пачах улшăнман теме çук. Пурнăç аталансах пырать, çынсем тата лайăхрах пурăнасшăн.**
>
> **●Çак тапхăрта республикăри вăтам шалу 13000 тенкĕрен 21450-а çитнĕ. Бюджет тытăмĕнче вăл 11000 тенкĕрен 21000-е çити ӳснĕ, экономикăри вăтам шалупа танлашнă. Пайăррăн илес тĕк яллă вырăнсенче ĕçлесе пурăнакансен шалăвĕ – 1,5 хут, тухтăрсен – 1,5 хут, учительсен – 2 хут, воспитательсен 3 хут ӳснĕ.**
>
> **●Ĕççĕрлĕх 4 хут чакнă. Çынсене ĕçпе тивĕçтерес енĕпе Чăваш Ен Раççей федерацийĕн субъекчĕсен хушшинче 3-мĕш вырăн йышăнать.**
>
> **●Ял хуçалăх тата апат-çимĕç хакĕсем пирĕн республикăра пĕчĕкки те пуриншĕн те паллă.**
>
> **●ЖКХ тарифĕсене 4 процентран ытла ӳстермессе сăмах панă. Шантарнине пурнăçланă. Çав вăхăтрах республикăри кашни 4-мĕш çемье ЖКХ тăкакĕсене саплаштарма субсиди илет.**
>
> **●Пурăнмалли çурт-йĕр тăвас енĕпе Чăваш Ен /çын пуçне шута илсе/ – лидерсен йышĕнче. Ку енĕпе çамрăк çемьесемпе учительсем патшалăх пулăшăвĕпе усă кураççĕ.**
>
> **●Республикăра пĕчĕк тата вăтам предприятисен тата вĕсенче ĕçлекенсен йышĕ ӳссе пырать.**
>
> **●Патшалăх парăмĕ 70 процентран 37-е çити чакнă.**
>
> **●Чăваш Енре пурăнакансен ĕмĕрĕ 2 çул вăрăмланса 70,8-а çитнĕ.**
>
> **●Пепкесемпе вĕсен ашшĕ-амăшне панă сăмаха та тытма шантараççĕ – 2015 çулта ача сачĕсенче черет пачах пулмалла мар.**

Тĕрлĕрен пулать-мĕн. Паллах, пысăк укçапа çыхăннă ыйтусене вырăнти влаç татса параймĕ – правительство пулăшăвĕ кирлех кун пек чухне. Анчах тепĕр çĕрте лав 4 уйăх таран вырăнтан хускалманнине ăнланма çуках. Çĕмĕрле, Улатăр, Канаш хулисен ертӳлĕхĕ пасар саманинче ĕçлеме ниепле те вĕренсе çитеймест. Чăн та, Канашсем тилхепене хĕрарăм аллине панă. Республика Пуçлăхĕ Людмила Ивановăран нумай кĕтнине пытармарĕ.

РФ Патшалăх Думин депутачĕ кĕпĕрнесем туса хурасси пирки мĕн шухăшланипе тата Раççей Президенчĕпе Владимир Путинпа тĕл пулнин кадр хыçĕнче мĕн юлнипе те кăсăкланчĕç çивĕч чĕлхеллисем. М.Игнатьев кĕскен кăна хуравларĕ: "Нимĕн те". Апла наци республикисемшĕн хăрушлăх çук. Раççей ертӳçипе тĕл пулни пирки вара халĕччен кашни сăмахнех сӳтсе явнă ахăр. 5 çыру хатĕрленĕ, вĕсене федераци министрĕсем патне çитернĕ. Пĕлтерĕшлĕ ыйтусем пулсан, паллах, Раççей Президенчĕпе малашне те тĕл пулĕç.

## Вĕренӳ

Ĕç рынокĕнче çаплах экономистсемпе юристсен лару-тăрăвĕ питĕ çивĕч. Наци кадрĕсем хатĕрлес енĕпе вара ыйту хĕрсех çитнĕ – бюджет вырăнĕсене пĕтернĕ. Чăвашăн пултаруллă ачисем маларах Г.Лебедев ячĕллĕ наци лицейĕнче вĕреннĕ. Халĕ ку лицей çук ĕнтĕ...

Михаил Васильевич инженер специальноçĕсене асăрхама сĕнчĕ – электротехника факультечĕн студенчĕсем, сăмахран, 3-4-мĕш курссенче ăс пухнă чухнех ĕç тупаççĕ. Наци кадрĕсене патшалăх шучĕпе хатĕрлес ыйтăва вара çĕр-шыв шайĕнче татса памалла – чăваш аслă шкулĕсем федераци тытăмĕнче шутланаççĕ. РФ Вĕренӳ министрĕпе ку ыйтупа калаçнă, малашне те куçран вĕçертмĕç. Уйрăмах пултаруллă ачасене те тĕрев кирлĕ – вĕсене музыка училищине йышăнма палăртнă.

## Тиркессишĕн тиркемелле мар

Калаççан сăмах теççĕ те, анчах та çакăн пек тĕл пулусенчен, ман шухăшпа, усси пулмаллах. Республика Пуçлăхĕ ахальтен вăхăт уйăрмасть-тĕр журналистсем валли. Тĕрлĕ предприятие, района тухса çӳренĕ май та хутшăнать-ха вăл МИХсен ĕçченĕсемпе. Çапах та ятарласа курса калаçмашкăн та çулталăк тăршшĕпе сăлтав пухăнать-тĕр. Хăш енĕпе тата ытларах çанă тавăрса ĕçлемелле? Пурне те асăрхаса çитерме те çук-çке тепĕр чух. Палăртмалла, калем ăстисем нумай чух тивĕçлĕ ыйтусемех хускатаççĕ. Хăшĕ-пĕри çеç, çакăнпа усă курса, ертӳлĕхе унтан та кунтан чĕпĕтсе илме хăтланать. Тивĕçлĕ чĕпĕтсен юратчĕ-ха, анчах та чăркăшланса шалтан шала кĕме хăтланни никама та чыс кӳмĕ. Хăйсене "оппозици" теме хăнăхнă МИХсен Интернетри сайчĕсене пресс-конференци умĕн ятарласа "шĕкĕлчерĕм". "Пире чĕнмен!", "Курăпăр-ха: чĕнĕç-и?" – çакăн йышши нăйкăшусемпе тулнă кăларăмсен журналисчĕсем чипчиперех ларатчĕç ыттисен хушшинче. Унтан та ытла – вĕсене темиçе хутчен те ыйтма ирĕк пачĕç. Çакă пулать-ши сăмах ирĕкне хĕсни? Пушшех те, наци телекуравне интервью панă май ЧР Пуçлăхĕн пресс-секретарĕ М.Вансяцкий пурне те эфир урлах аса илтерчĕ пресс-конференци пирки. Шел те, "оппозици" ку таранччен хускатнă ыйтусенех муталарĕ. Тиркешмелли урăх нимĕн те юлманнипе çыхăннă-ши ку? Хăйсен аллинчи "козырь" шутланакан ыйтăва та Михаил Васильевич патне пурин умĕнче çитерчĕç вĕсем – ЧР экс-президенчĕ, РФ ял хуçалăх министрĕ Николай Федоров çак кунсенче Чăваш Ене çитнĕ, анчах та республика Пуçлăхĕн темĕнле сăлтавпа унпа тĕл пулма май килмен... Михаил Васильевичăн хуравĕнче "эпĕ халĕ 4 çул каяллахи мар" текен çирĕплĕх палăрчĕ. Мĕнех, отпускри çыннăн темĕн тума та юрать. Николай Васильевичпа ĕçлĕ çыхăнусем йĕркеллĕ шайра пыраççĕ. Атăлçи тăрăхĕнчи регионсен ертӳçисен Эрĕнпурта иртнĕ тĕл пулăвĕнче те ыйтусене сӳтсе явнă унпа. Чăваш Ене килсен тĕл пуласси пирки вара вăл сăмах хускатман. Апла тăк федераци шайĕнчи министра каннă вăхăтра мĕн тесе чăрмантармалла? Ыйтăвĕсем пур-ха та... Калăпăр, Муркаш районĕнчи "Ударник" пĕрлешӳре, Мускав аллине куçнăскерте, шалу вăхăтра тӳлемеççĕ, лару-тăру начар. Республикăна каялла туртса пырать вăл. Анчах та ку – урăх калаçу...

Пурнăçа малалла аталантарас тесен критика кирлех, анчах та тиркессишĕн тиркемелле мар, çитменлĕхсене тупса вĕсене пĕтерессишĕн пĕрле çанă тавăрса ĕçлемелле. Çак шухăша палăртрĕ Михаил Игнатьев.

**Маргарита ИЛЬИНА.**
Сергей ЖУРАВЛЕВ сăн ӳкерчĕкĕ.



САМАХ ПАРĂР-ХА

# Черет хăратать, е Больница еннелле мĕншĕн çаврăнса пăхас та килменни çинчен

Елена АТАМАНОВА

**Çемьере йыш хушăнни хаех – пысăк телей. Юлашки çулсенче хĕрарăмсем чăннипех те ача ытларах çуратма пуçларĕç. Патшалăх та май пур таран пулăшать. Укçа та параççĕ, çĕрпе те тивĕçтереççĕ, çурт-йĕр ыйтăвне те татма май пур. Çапах та ача çитĕнтерме нихăçан та çăмăл пулман. Çут тĕнчене тин килнĕ пепке валли те сахал мар нухрат кирлĕ. Çуралсанах ача садне черет тăмалла. Кайран шкул пирки шухăшлама тытăнмалла. Ку хăй – уйрăм калаçу. Паллах, ашшĕ-амăшĕн телейĕ – пепке таса та сывă пулнинче. Унран хакли нимĕн те çук. Çавăнпа та паян сывлăх пирки сăмах хускатасшăн. Пĕлетпĕр-ха, республикăри хуласемпе ялсенче ачасем йышланнине кура больницăра специалистсем патне лекме чăннипех те çăмăл мар. Чирпе вара шÿтлеме юрамасть, сывлăха вăхăтра тĕрĕслеттерсе çиййĕнче сиплеммеллех. Пĕлĕшĕм ачин хăлхи ыратнипе отоларинголог патне çырăнма шухăшланă. Регистратурăра ку тухтăр патне уйăхран çеç лекме май пурри, ыратакан хăлхапа вара çырăнмасăрах йышăнасси пирки пĕлтернĕ. Ачин сывлăхне кĕрсе тĕрĕслеттерейнĕ-ха вăл. Анчах та йĕрмĕшсе çеç тăракан çулталăкри пепкепе черетре çур кун ларнă. Çитес эрнере тепре килме хушнă. Çав куна кĕтсе хăраса пурăнать паян.**

**Ача садне черет çитнĕ май иртнĕ çуркунне медицина тĕрĕслевĕ витĕр тухни асран тухмасть. Больницăсем тăрăх çÿресе икĕ уйăха яхăн та тăсăлса кайрĕ ĕç. Кăç тухтăрĕ патне каяс терĕмĕр. «Ун патне уйăх маларах çырăнмалла», – терĕç регистратурăра. Садик парассине пĕлмен-çке малтанах. Е сăлтавсăрах çырăнса хумалла пулнă-ши? Ытти больницăра та çак ÿкерчĕкех. Хăш-пĕр поликлиникăра кăç тухтăрĕ пачах та çук. Хулари çурçĕр хĕвел анăç районĕнчи пĕр оптикăна кайса тÿлевлĕ тĕрĕслеттерсе тухрăмăр. Хирург, невропатолог сырăса таçта та çитнĕччĕ. Стоматолог та икĕ эрнерен çеç йышăнăччĕ. Вĕçне-хĕрне çапла аран туха пĕтнĕччĕ. Чăн та, калама çук йывăр специалистсем патне лекме. Тунти кун – уйрăмах. Эрне пуçламăшĕнче уйăхри пепкесен сывлăхне тĕрĕслеççĕ. Çулталăк хушшинче, тен, лару-тăру улшăннă пуль тесе шухăшланăччĕ те, çук иккен, халĕ те çаплах. Çак вăхăтра больницăра шăпах ача садне каякансем тĕрĕсленеççĕ. Ятарласа кăсăклантăм – нихăш специалист патне те çырăнма çук. Шурă халатлисен хушшинче шелленипе черетсĕр йышăнакансем те пур иккен. Çавăнпа усă курса та-и, тен, тухтăр алăкне çемйипех сыхлаççĕ. Хăшĕ-пĕрин кăнтăрлаччен – кукамăшĕ е асламăшĕ, апат хыççăн амăшĕ килет. Çапла кăна лекме пулать специалист патне. Тухтăрсем çитеĕксĕррипе тата нумайăшĕ çуллахи вăхăтра отпуска кайса пĕтнипе те çыхăннă çакă. Хамăр çÿрекен ача-пăча поликлиникин алăкĕ çинче çуркуннерен невролог, окулист, фтизиатр кирли пирки пĕлтерÿ çакăнса тăрать. Висĕ уйăх иртнĕ – тухтăр тупăнман.**

**Ача-пăча поликлиникинче кăна мар, мĕн пур больницăрах çакнашкал лару-тăру. Кÿршĕре пурăнакан кинеми кашни çулах медицина тĕрĕслевĕ иртет. 3-мĕш ушкăн инваличĕ вăл. Ÿксе купарчапа пĕçĕ тĕлĕнчи шăмма хуснă хыççăн туяпа та аран çеç утталать. Ачисем аякра пурăннăран час-часах килеймеççĕ те мĕн пур çĕре такси тытса çÿреме тивет. Ури хытах ыратнăран, иртен пуçласа каçчен вăхăта больницăра ирттернĕрен куççульпех йĕрет тепĕр чухне. Çук, шурă халатлисене айăпламасть вăл, сусăр пулнине пĕлсе тăрсах çулсерен тĕрĕслев ирттернишĕн, больница тăрăх чупарса нушалантарнишĕн тарăхать.**

**«Кĕтес килмесен укçалла кайăр. Халĕ хулара уйрăм çынсен медицина центрĕсем те туллиех», – сĕннĕ пĕлĕшĕме регистратурăра. Ачисене çаватса кайнă хайхи, 1000 тенкĕ тÿлесе хăварнă. «Лайăх пăхрĕç, ăшă сăмахпа сиплерĕç. Çур кун черетре лармалла пулмарĕ, ачасене те ывăнтармарăм, вăхăт та перекетленчĕ. Хакĕ кăна сыртать. Мĕншĕн патшалăх поликлиникинче çакнашкал йĕрке мар-ши? Больница еннелле çаврăнса пăхас килми пулчĕ», – терĕ вăл.**

**Тухтăрсем чире шала яма хушмаççĕ. Хамăр та хаçатра çакăн пирки асăрхаттарса çырсах тăратпăр. Паллах, сывлăха вăхăтра тĕрĕслеттермелле, пĕр-пĕр амак çыпăçсан çиййĕнчех сиплес пуçламалла. Анчах та больницăри йĕркесĕрлĕх, черет хăратать.**

КУЛЬТУРА

# Вилĕмсĕр «Нарспи» авторĕн çулталăкĕ



**Çитес çул пирĕн республикăра хальхи чăваш литературин никĕсне хывнă Константин Иванов 125 çул тултарнине халаллана мероприятисем иртĕç.**

Хушура палăртнă тăрăх 2015 çулта Раççейре – Литература, Чăваш Енре Константин Иванов çулталăкне паллă тăвăпăр. Çавна май республикăра кĕçех йĕркелÿ комитетне, мероприятисен планне çирĕплетĕç.

Аса илтеретпĕр, Константин Васильевич 1890 çулхи çу уйăхĕн 15-мĕшĕнче Пушкăрт Республикинчи Пелепей районĕнчи Слакпуç ялĕнче хресчен çемйинче çуралнă. Иван Яковлев Патриарха чăвашла кĕнекесем кăларма пулăшнă. Вилĕмсĕр «Нарспи» авторĕ, поэт, драматург, куçаруçă, прозаик, фольклорист, ÿнерçĕ 25 çулта туберкулезпа чирлесе çĕре кĕнĕ.

**Мария РОМАНСКАЯ.**

САККУНЛĂХ

# Прокурор хÿтĕлет

**Граждансен социаллă правине хÿтелесси прокуратурăшăн – тĕп ыйтăва. Чи малтанах пулăшу сахал тупăшлисене, ватăсемпе ачасене, тăлăхсене кирлĕ.**

Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçин ветеранĕн тăлăх арăмне Е.Александровăна /Йăнтăрччĕ ял тăрăхĕ/ хваттер черетне тăратман, унăн çурчĕ 58% кăна кивелнĕ тесе сăлтавланă. Прокуратура тĕпчекĕ тăрăх – тĕрĕслев комиссийĕ çурта пăхнă чухне пур конструкцие шута хуман. Шупашкарти БТИ экспертчĕсем пÿрт 71% юрăхсăра тухнине палăртнă. Çакăн хыççăн тин хĕрарăмăн черете тăма май килнĕ.

Д. çурт-йĕр çавăрма субсиди илеймен, Турикас Тушкил ял тăрăх администрацийĕ вăл ыйтса çырнă хута регистрацилемен те иккен. Ку тĕслĕхре те прокуратура тĕрĕслĕхе çиеле кăларма пулăшрĕ.

Вăрçă ветеранне П.Потапова санаторипе курорт сиплевне каймашкăн путевка пама хирĕçленĕ. II ушкăн инвалидне хÿтĕлесе прокуратура суда тавăç тăратрĕ. Çакăн хыççăн тин ватă çынна тÿлевсĕр путевкăпа тивĕçтерчĕç.

Кÿмепе çÿрекен сусăрсем «Турикас Тушкил» пĕрлешÿн, «Тăвай кооперативĕ», «Сто мелочей» лавккисене кĕрсе тухайман. Вĕсен хуçисен тĕлĕшпе пандус вырнаçтарма ыйтса тавăç тăратнă, суд прокурор сĕнĕвне тивĕçтерме йышăннă.

Тăвайри ача сачĕн заведующийĕ район администрацийĕн ĕçченĕн пепкине черетсĕрех йышăннă. Çав вăхăтра нумай ачаллă çемьери тĕпренчĕк шкул умĕнхи учреждение воспитани илеймен. Ку тĕслĕхпе те прокурорăн суда кайма тиврĕ, ачана садике вырнаçтарма май килчĕ.

Тăлăхсене пурăнмалли çуртпа вăхăтра тивĕçтерессине те куçран вĕçертместпĕр. О.Спиридоновăпа Д.Егоровăн ку тĕлĕшпе йывăрлăхсем тухрĕç, çапах та прокуратура хута кĕнипе пĕр хĕре пулăшма май килчĕ.

**Оксана ЯСТРЕБОВА,**
**Тăвай районĕн прокурорĕ.**

БРИФИНГ

# Ачасем аслисен тимсĕрлĕхне пула шар кураççĕ

**«Кăçалхи çичĕ уйăхра республикăра 22 ача çÿллĕшĕнчен ÿкнĕ, 3-шĕ вилнĕ /пĕлтĕрхи çак тапхăрта – 10, пурте чĕрĕ юлнă/. 19 тĕслĕхре пепкесем пурăнмалли çуртсенченех ÿкнĕ», – палăртнă иртнĕ тунти кунхи брифингра ЧР сывлăх сыхлав министерствин уйрăм ертÿçи Нина Емельянова.**

Журналистсен ыйтăвĕсене çавăн пекех ЧР гражданла оборона тата чрезвычайлă лару-тăру патшалăх комитечĕн председателĕ Вениамин Петров, ЧР МЧС тĕп управленийĕн ĕçченĕ Герман Майков хуравланă.

Шар курнă ачасенчен ытларахăшĕ – 15 пепке – 1-5 çулта кăна пулнă. Апла тăк ашшĕ-амăшĕн тимсĕрлĕхĕ инкек кÿнĕ, ăнăçсăр çемьесенче кăна мар, йĕркеллĕ пурăнакансемех ачисене асăрхаса çитереймен.

Кăçал ачасем шыва путнă 12 тĕслĕхе шута илнĕ, 7-шĕнче путакана çăлса хăварма май килмен. Чылайăшĕнче пĕчĕккисемпе пĕрле аслисем те каннă-ха, анчах хăйсен ĕçĕпе пăрăннă самантра хăрушсăрлăх пирки маннă. Пĕлтĕр 7 уйăхра 1 ача шывра инкеке лекнĕ, вăл чĕрĕ юлнă.

Пепкесем çÿллĕшĕнчен ÿкни тавра çу пуçламăшĕнче ирттернĕ брифингра та калаçнăччĕ. МИХсем ку темăна çутатни усăсăр мар: утă уйăхĕнче чÿречерен ÿкекенсен йышĕ, çу-çĕртмерипе танлаштарсан, икĕ хутчен чакнă. Эпир те тепĕр хут аса илтеретпĕр – ашшĕ-амăшĕн ансат правилăсене манмалла мар: пĕчĕккисене хăйсем тĕллĕн ан хăварăр, хăрушсăрлăхпа çыхăннă кирек мĕнле лару-тăрура та ачасемшĕн тĕслĕх пулма тăрăшăр, килте, урамра, шыв хĕрринче... мĕнле тытмаллине ас тутарсах тăмалла. Хальхи чÿрече конструкцийĕсен пахалăхĕ иккĕлентерет, çавна май ашшĕ-амăшĕн те, производительсен те унăн çирĕплĕхне лайăххах тĕрĕслемелле.

**Анна ГЕРАСИМОВА.**

ÇĔНĔЛĔХ

# Çул саралать

**Шупашкар урамĕсемпе çÿрекенсем асăрхарĕç пулĕ – хăш-пĕр вырăнта «зебрăсем» сарă тĕспе витĕнчĕç. Хула администрацийĕн ЖКХ тата хăтлăх кĕртес тĕлĕшпе ĕçлекен управленийĕн пресс-служби пĕлтернĕ тăрăх – çуран çÿрекенсен каçма çулĕ аякранах лайăх курăнтăр тесе çĕнетеççĕ. Ку ĕçе «2014-216 çулсенче Шупашкарти транспорт тытăмне аталантармалли» муниципалитет программипе килĕшÿллĕн пурнăçлаççĕ.**

Сарă паллăна сăрăпа мар, ятарлă пластикпа витеççĕ, унăн 30% – çутатакан вĕтĕ хăмпăсем. Материал атмосфера улшăнăвне лайăх чăтать: çуллахи шăрăха та, хĕллехи шартламана та тÿсĕмлĕ. Çул урлă çуран каçса çÿремелли 50-а яхăн вырăна çĕнетесшĕн, палăртнин çуррине пурнăçланă та ĕнтĕ. Авăнăн 1-мĕшĕччен шкул çумĕнчи «зебрăсене» сараççĕ.

Çул-йĕр хăрушсăрлăхне ÿстерес тĕлĕшпе хула бюджечĕ 26 миллион тенкĕ уйăрнă. Термопластик, сăрă, ĕçе пурнăçлама кирлĕ ытти хатĕр туяннă. Çавăн пекех çуран çÿрекенсем юраман çĕртен çул урлă ан каçчăр тесе картасем тытса çавăрнă.

**Лиана ВАНИНА.**

ХЎТЛĔХ

# Тăлăх куççулĕ çĕре ахалех ӳкет-ши?

**Обществăн хӳтлĕхсĕр пĕр пайне – тăлăхсене – шăпа кăна мар, влаçра ларакансен тимсĕрлĕхĕ кӳрентересси çав-çавах тĕл пулкалать-ха пирĕн пурнăçра. Иртнĕ уйăхра кăна ЧР прокуратурин сайтĕнчи хыпарсен ярăмĕнче çавнашкал пĕр тĕслĕхе асăрхарăм. Элĕк районĕнчи Ехремкасси ял тăрăх администрацийĕ ашшĕ-амăш хӳттисĕр юлнă хĕре социаллă найм мелĕпе... пурăнма юрăхсăр сурт пани çинчен çырнăччĕ унта. Ку ĕç-пуç пирки тĕплĕнрех пĕлес тĕллевпе Элĕк районĕн прокурорĕн пулăшуçипе Алина Большовăпа тĕл пултăмăр, 200-е яхăн страницăллă тĕрĕслев материалĕпе паллашрăмăр. Шар курнă Валентина Степановăпа та куçа куçăн калаçасшăнччĕ, 24-ри çамрăк хĕрарăм 1,1 çулти ывăлĕпе больницăра выртать-мĕн, унпа телефонпа çыхăнтăмăр.**



## 300 пин тенкĕлĕх çурт

Ашшĕ-амăшĕ чĕрĕ-сывă çĕртех тăлăх ятне илтнĕскере Куславкка районĕнчи тăванĕсем опекăна илнĕ. 2007 çулта Валентина, Ехремкассинче прописка́ра тăнă май, ял тăрăх администрацине пурăнмалли çуртпа тивĕçтерме ыйту çырнă. Ун чухне те саккуна йĕркеллĕ ăнланса çитеймен пуçлăхсем, те яланхи пекех вăхăт тупайман ĕнтĕ – хĕре хăйнех çурт шырама хушнă. Ăна туянмашкăн тепĕр çулхине ял тăрăх администрацине 278800 тенкĕ укçа куçнă. Тĕлĕнмелле те, çак хакпа мĕнле çурт илме пулать-ши? 4 çул каялла та Элĕк районĕнче йĕркеллĕрех çуртсем 500-600 пин тенкĕ тăнине пĕлтĕм. Мĕншĕн ял тăрăхне çакăн чухлĕ кăна куçнă? Ĕçе тĕпченĕ май прокуратура ĕçченĕсен умне вун-вун ыйту тухса тăнă.

Валентина сывăхри пур яла та çитнĕ. Юнтапа ял тăрăхне кĕрекен Анаткасра 300 пин тенкĕпе сутма килĕшекен тупăннă. Тăпăлкка кăна çĕнĕ çурт, ял вĕçĕнче вырнаçнăскер... Анчах пурăнмалла туса çитерейменскерте çутă та, ăшă та, ытти коммуникаци те кĕртмен, урамалла та кантăксăр чӳречесем кăна тинкернĕ. Хăтлă пӳртпе тивĕçтересси ял тăрăх администрацийĕн тивĕçĕ пулнине пĕлмен çав айван та çамрăк хĕр. Саккунĕ те ун чухне вăя кĕме тытăннăччĕ кăна, пур кăткăслăха тĕшмĕртеймĕн тӳрех. Вырăнти влаç: «Сан валли укса пĕр хутчен кăна уйăраççĕ, унпа халь усă курмасан кайран парасса ан кĕт», – тенине те ĕненнĕ Валентина. «Нимĕнсĕр тăрса юличчен çак çуртра илес», – шухăшланă вăл. Килсĕр-çуртсăр нушаланаканскер, путакан çын улăм пĕрчипе те çăлăнăç шыранă евĕр, кирек епле кĕтес тупăнсан та савăнать. Тӳпери тăрнана кĕтиччен алăри çерçи лайăхрах пек туйăннă-тăр.

«Çурта мĕнле майпа пурăнма юрăхлă туса çитермелле-ши?» – 2010 çулта социаллă найм килĕшĕвне алă пуснă хĕр пăшăрхансах ӳкнĕ. Пулăшакан çук чухне ал-ура çавăрса ямашкăн вăй питти арçынна та çăмăл мар, 20-ри тăлăх пикен ку йывăрлăха мĕнле çĕнмелле-ха? Ача садĕнче поварта ĕçлекенскерĕн шалăвĕ те пысăк мар. Шупашкарта çын патĕнче пӳлĕм тара тытса йӳнеçтеркелесе пурăннă вăл.

## Отчетшăн кăна...

Ертӳçĕсем: «Тепĕр тăлăха çуртпа тивĕçтертĕмĕр», – тесе отчет панă та ĕçĕ те пĕтнĕ. Унта çын пурăнать-и, çук-и – ку никама та кăсăклантармасть тейĕн. «Никама та» тени тĕрĕсех марха, мĕншĕн тесен Элĕк районĕн шалти ĕçсен пайĕн экономика преступленийĕсемпе кĕрешекен сотрудникĕсем ку тĕлĕшпе 4 çул каяллах тĕпчев пуçарнă, материала пĕрре кăна мар следстви комитетне ярса панă. Анчах преступлени составĕ çук тесе уголовлă ĕç пуçарман.

Экспертиза палăртнă тăрăх, Степанова туяннă çурт – строительство вĕçленмен объект, вăл 64% кăна хатĕр. Социаллă найм килĕшĕвĕ çырнă вăхăтра санитарипе техника правилине нормине тивĕçтермен. Анчах пуçлăхсем «пурăнма юрăхлă» тесе суя документ хатĕрленĕ. Каярахпа çав çурта Валентинăна та, унăн ывăлне те прописка́на тăратнă специалистсем. «Укса тупса кăмака ларт та, çутă кĕрт те – пулчĕ те пурăнмалли», – сĕннĕ вĕсенчен пĕри тăлăха. Хăйсен ачисене те чӳречесĕр çуртра пурăнтарма хатĕр-ши вĕсем?

## Камран пулăшу кĕтмелле?

«Прокуратурăран», – тейĕттĕм, çавăнпах-тăр çынсем унта тĕрĕслĕх, саккунлăх шыраса каяççĕ. Элĕк районĕн прокуратури социаллă хӳтлĕхсĕррисен ыйтăвĕсене чи малтан тивĕçтерме тăрăшать. Прокурор Ехремкасси ял тăрăх администрацийĕ Валентина Степановăпа тунă социаллă найм килĕшĕвне пăрахăçлама, хĕре хваттер кĕтекенсен йышне кĕртме ыйтса тавăç тăратнă. Утă уйăхĕн 8-мĕшĕнче суд уçă ларăвĕнче ку ĕçе пăхса тухнă.

«Килĕшĕве пирĕнпе çырман, Степанова çурт мĕнле шайра пулнине пĕлсе тăнă, çав-çавах алă пуснă. Эпир куншăн яваплă мар, вăхăчĕ те унтанпа чылай иртнĕ», – судра район администрацийĕ çакнашкал хуравлани тĕлĕнтерет. Влаçрисем тăлăха пулăшма тĕв туман та иккен!.. Унтанпа ял тăрăхĕн пуçлăхĕ те улшăннă ĕнтĕ, малтанхи ертӳçĕн хăтланăвĕшĕн халĕ кам явап тытĕ? Прокуратурăна ăнлантарса çырнă тăрăх – Ехремкасси ял тăрăхĕн малтанхи пуçлăхĕ Анаткасри çурта хăй кайса та курман, вăл мĕнле шайрине те пĕлмен. Патшалăх укçипе михĕри пăрие те туянма юрать тесçĕ-ши чиновниксем? «Строительство объекчĕ» мĕнле майпа «пурăнма юрăхлă çурта» çавăрăннине те татăклăн никам та калайман...

## Ырă çынсем патĕнче

Çĕр çинче ырă çын сахал мар. Валентинăна та ун пеккипе шăпа курнăçтарнă. Шупашкарта чиркӳре вăл Валентина Терентьевăпа паллашнă, кайран туслашнă та халĕ те пĕрпĕринчен уйрăлмаççĕ. Ун чухне Валя ача амăшĕ пулма хатĕрленнĕ. Каччи çие юлнине пĕлсен, йывăрлăхран хăраса унпа хутшăнма пăрахнă-мĕн. Чун суранĕ пирки Валя амăшĕ вырăннех йышăннă хĕрарăма каласа кăтартнă. Пурнăç тути-масине самай ас тивнĕскер нушапа асапланакан тăлăха хĕрхеннĕ, пулăшма тытăннă. Пепке çуралсан вăлах больницăран илсе тухнă, кăкăр сĕчĕ ан типтĕр тесе çамрăк амăшĕ патне усăллă апатçимĕç йăтнă. Аҫа укçипе мала каяймăн, тара тытнă пӳлĕмшĕн сахал мар тӳлемелле-çке.

Тĕпренчĕкне алла тытсан ашшĕ туйăмĕ вăранасса шаннă çамрăк амăшĕ. Савнийĕ патне шăнкăравланă, чĕннĕ... Анчах лешĕ килмен. «Пылак çырлана» пĕрле сиетпĕр те, йӳççине, темшĕн пĕччен ас тивме лекет çав хĕрарăма... Валентина Терентьева Вальăна тăвата уйăхри пепкипе пĕрле хăйĕн 3 пӳлĕмлĕ хваттерне пурăнма илсе кайнă. Пачах ют çынсем ăна ывăлне çитĕнтерме пулăшаççĕ халĕ, çăкăр касăкне те пĕрле пайлаççĕ вĕсем.

**ЮЛАШКИНЧЕН КАЛАНИ.** *Суд прокуратура тавăçне тивĕçтернĕ, Элĕк район администрацине Валентина Степановăна черетсĕрех хваттер илекенсен списокне кĕртме йышăннă. Ку ĕçе эпир те куçран вĕçертмĕпĕр.*

**Алина ИЗМАН.**

ВУЛАКАН ПУЛĂШУ ЫЙТАТЬ

# Сусăрăн пенсийĕнчен укçа тытса юлаççĕ

***Хисеплĕ «Чăваш хĕрарăмĕ»! Кăткăс пĕр ыйтăва татса пама пулăшсамăр.***

***Эпĕ 2011 çулхи ака уйăхĕнче предприниматель пек шута тăтăм. Ĕçпе тивĕçтерекен биржăран 59 пин тенкĕ укçа пачĕç. Унпа выльăх туянтăм. Анчах ниепле те алă-ура çавăрса яраймарăм. Эпĕ аннепе пурăнаттăмччĕ, ачасем – хулара. Никам та пулăшмасăр хушма хуçалăха аталантармашкăн йывăр çав.***

***2012 çулхи раштавра 3-мĕш ушкăн инваличĕ пулса тăтăм, пенси – 8600 тенкĕ – илсе тăратăп. Хăлха илтменнипе аппаратăп, аппаратпа çӳретĕп. Кăçал 78 çула çитсе анне вилчĕ, пĕччене тăрса юлтăм.***

***Халĕ эпĕ пĕр ĕнепе пĕр вăкăр усратăп. 2013 çулшăн пенси тата страховани взносĕ 36 пин тенкĕ тӳлеме ыйтаççĕ манран. Канашламасăрах пенсирен катса юлаççĕ. Выльăх-чĕрлĕх валли апат туянмалла, хамăн та хырăм выçать, эмел кирлĕ, çутă, газ укçи, уйăхра 3 пин тенкĕ кредит тӳлемелле... Çынăн мĕнле пурăнмалла вара?***

***Инвалид пенсийĕнчен укçа катни тĕрĕсех-и? Уйăхне миçе процент тытса юлма юрать? Мĕншĕн специалистсем малтанах ĕç-пуç пирки нимĕн те йĕркеллĕ ăнлантармаççĕ?***

**Галина ДЕЛОВА.**
Куславкка районĕ.

Çырăва РФ Пенси фончĕн Куславкка районĕнчи управленийĕн ертӳçи Надежда Макарычева хуравлать.

«Г.Делова 2011 çултанпа предприниматель пек шутра тăрать. 2012-2013 çулсемшĕн страховани взносне тӳлеменнипе парăм пуçтарăннă унăн. Налукăн вăхăтра парса татайман пайне саплаштарма темиçе хутчен те асăрхаттарнă ăна. Ыйтнине пурнăçа кĕртейменшĕн парăма шыраса илесси çинчен йышăну кăларнă, ĕçе суд приставĕсен службине çитернĕ. Кун пирки те Г.Деловăна пĕлтернĕ.

Инвалидсене социаллă хӳтлĕх кӳрессине федерацин 24.11.1995 çулхи ФЗ-181 саккунĕнче пăхса хунă.

Хальхи вăхăтра сусăрсене пенсипе тивĕçтересси федерацин 17.12.2011 çулта вăя кĕнĕ «РФ ĕç пенсийĕ çинчен калакан» ФЗ-173 саккунĕпе килĕшӳллĕн пурнăçа кĕрет. Унтах федерацин «Исполнительнăй производство çинчен» калакан 02.10.2007 çулхи ФЗ-229 саккунĕнче ĕç пенсийĕнчен укçа тытса юлмалли йĕркине, сăлтавне, виçине палăртнă. Пенсирен катма ирĕк паракан сăлтавсенчен пĕри – исполнительнăй документ, ăна пурнăçланă чухне тупăшăн 50% ытлашши тытса юлма юрамасть.

Укса катса юлма чаракан тупăшăн тĕсĕсене те 02.10.2007 çулхи саккунăн 101 статйинче çырнă. Унта сусăрсене тӳлекен ĕç пенсине кĕртмен, уйăхсерен тӳлекен укçа /ЕДВ/ пирки асăннă.

Г.Деловăна, 3-мĕш ушкăн инваличĕ пулнă май, 17.12.2001 çулхи саккунăн 8-мĕш статйипе килĕшӳллĕн сусăрсен ĕç пенсине тата 24.11.1995 çулхи саккунăн 28-мĕш статйипе килĕшӳллĕн уйăхсерен тӳлекен укçа /ЕДВ/ параççĕ.

Пенси фончĕн управленийĕ суд приставĕсенчен илнĕ исполнительнăй производство документне никĕсе хурса ĕç пенсийĕн сумминчен парăма тĕппипех тӳлесе татиччен 50% тытса юлать. Уйăхсерен тӳлекен укçаран /ЕДВ/ пĕр пус та катмаççĕ».





ТĔН

# Асамлăх... пирĕнпе юнашарах

**Шанăçпа канăç çухатнă çын яланах лăпкăлăх шырать, асамлăх кĕтет. Алă усăнсан та ырă малашлăха ĕненни, чăнах, вăй парать. Етĕрне районĕнчи Пушкăртра пулса курнă хыççăн çакнашкал пĕтĕмлетӳ турăм: çут тĕнчене телей курмах çуралать этем.**





**Иерусалим Турă Амăшĕн сăваплă çăл куçĕ патне ача çуратайман хĕрарăмсем шыва кĕме килни пирки пĕлĕшсенчен илтнĕччĕ. Алексей атте мĕн шухăшлать-ши çакăн пирки? «Сываласса ĕненмелле, Турăран тархасласа пулăшу ыйтмалла», – вĕрентсе калать тĕн çынни.**

**Вăл çийĕнчех ал çырăвĕсен кĕнекине туртса кăларчĕ. Çакăнта – нумай-нумай çыннăн нушипе савăнăçĕ. Шыва кĕрсе тасални, кĕлĕ туни çĕнĕ пурнăç пуçлама пулăшни пирки калана. Кашни тĕслĕх хăех хăват хушать. Хăшĕпĕри чир историне те хутсен хушшине хĕстерсе хăварнă: сывалнă çынна вăл текех кирлĕ мар. Ыттисем пĕлччĕр, хавхаланччăр тенĕ ĕнтĕ.**

### Ача çуратайманнисем йыш хушаççĕ

Алексей атте ку тăрăха хĕрарăм чирĕсемпе аптăракансем çӳренине пытармасть. «Тухтăрсем хутаçлă шыçă тупрĕç. Операци кунне те палăртнăччĕ. Больницăна вырттиччен Иерусалим Турă Амăшĕн çăл куçĕнче çăвăнса тухрăм. Çакăн хыççăн хутаçлă шыçă çухалчĕ», – çырса хăварнă пĕр хĕрарăм.

Ыттисене ĕненес тĕк – таса шыв витĕмĕпе вĕсен уйăх хушши йĕркеленнĕ. Вун-вун çул гинеколог патĕнче сипленекенсем те эмел мар, шăпах сăваплă вырăн пулăшнине çирĕплетеççĕ. Пур пĕрех çакă больницăра тĕрĕсленсе тăмалла маррине пĕлтермест паллах.

Хырăм ӳксен те чун хурланать, куççуль тухать. «Темиçе хут çие юлчĕ, анчах йыш хушăнмарĕ. Турă Амăшĕ пулăшнипе ача çуралчĕ. Халĕ хĕрĕм 4 çулта», – телейлĕ амăшĕпе пĕрле савăнатăп.

Çветтуй шывпа çăвăнса тухнă хыççăн хĕрĕх чĕрнеллĕ пулнине ĕненеççĕ хĕрарăмсем. Кĕнекери тав сăмахĕсем чунран тухни паллă. Чĕре айĕнче ача тĕвĕленни, çут тĕнчене пепке килни – капашсăр пысăк савăнăç. Пур хĕрарăм та амăшĕ пулма ĕмĕтленет.

«Эпĕ 42-ччĕ. Ача манăн çунат айĕнчен вĕçсе тухнăччĕ. Иккĕмĕш упăшкапа çыраннмасăр пурăнаттăмăр. Вăл тĕпренчĕк парнелемесĕр качча илме килĕшместчĕ. Тĕрлĕ çĕрте сипленсе ывăнтăм – çаплипех çие юлмарĕ. Сăваплă вырăна килсе кайни манăн пурнăçа тĕпрен улăштарчĕ. 43 çулта çие юлчĕ, ача çуратрăм», – тепĕр çемье пурнăçĕ куç умне тухса тăчĕ. «Авланас пулать», – пил панă арçынна пачăшкă. Алексей атте кашнин шăпипе кăсăкланать. Халĕ Турă, çын йĕркине пăхăнса пурăнать мăшăр.

Арăмĕпе упăшкин пĕрпĕрне упрамалли, хисеплемелли, юратмалли çинчен вăрах каласрăмăр пачăшкăпа. Çемье мĕншĕн саланатьши? Сăлтавне хамăрта шырамалла ахăр. Эх, ют çын мăшăрĕ темшĕн хитререх туйăнать. Е тата ыт ахаль тарăхни, пуш сăмах çаптарни йĕркеллĕ-и?

### Тухтăрсемшĕн те тĕлĕнтермĕш

Пушкăрта килсе кайнисен пурнăçĕнчи тĕлĕнтермĕш самантсемпе малалла паллашатăп. «Хăлха шыçнăччĕ. Больницăра сипленни витĕм кӳмерĕ. Таса çăл куçра çăвăнсан хăлхаран юнлă шыв тухрĕ», – каласа кăтартать çӳлти вăй хăватне ĕненекен.

«Пĕчĕкренпех пӳре ыратать. Тухтăрсем ача çуратма хушмаççĕ. Сăваплă вырăнта çăвăнса тухрăм та хăнăхнă йăлапа больницăна кайрăм. Анализ илчĕç. Тĕрĕслев пӳре чирĕ парăннине çирĕплетрĕ. Тухтăрсем пуçтарăнса ларутăрăва сӳтсе яврĕç. Унтанпа 6 уйăх иртрĕ – чир палли çук», – вулатăп малалла. Алексей атте çак хĕрарăм йыш хушса телей тупни çинчен каларĕ.

Çар çынни пӳрери чулсене пула нушаланнă. «Эпĕ сипленмен, сăваплă вырăнта çеç çăвăннă. Çавна май чулсем самаях пĕчĕкленнĕ», – маншăн йăлтах кăсăклă.

Çак кун Константинпа паллашрăм. Шупашкар каччи ялта кукамăшĕ патĕнче хăналанать. Ытларах ĕçленине кура унăн хул айĕ ыратма пуçланă. «Хулăнрах тăхăнса çӳре», – канаш панă медсестрара тăрăшакан амăшĕ. Мунчара çапăнса пăхнă çамрăк, анчах ăна милĕк ташши те пулăшайман. Пачăшкă сĕннипе таса çăл куçра çăвăннă Константин. Мĕн тетĕр – халĕ хăйне лайăх туять, чир аптратман та тейĕн.

### Авалхи çăл куç

Çак вырăна 2004 çулта хăтлăлатнă. «Часавай çĕклесен кĕлĕ ирттертĕмĕр. Халăх нумай пуçтарăннăччĕ. Пĕр самантра Таса Çăл куç шывĕ сиксе тапма пуçларĕ. Хăмпусем сас кăларса çуралчĕç. Гейзера аса илтерчĕ çакă. Шыва кĕнĕ вăхăтра пĕлĕтсен хушшинче хĕрес куранчĕ», – аса илет Алексей атте.

Çак çăл куç шывĕ çынсене сиплени авалтанах паллă. XIX ĕмĕрте вăл Пушкăртран аякра мар вырнаçнă Ленаяль поселокĕнче юхса выртнă теççĕ. Çынсем каланă тăрăх – çăл куç çĕр айĕпе кайса çак вырăна килĕштернĕ. Унта 1917 çулччен часавай пулнă. Ĕлĕкхи çынсем те кунти шывпа çунă япалана тăхăнтартсан ача сывалнине курса тĕлĕннĕ. Халĕ те чирлĕ пепке вăй илнĕ тĕслĕх сахал мар. Пĕрин – пуçĕ, теприн – ăш-чикĕ, виççĕмĕшĕн хăлхи пĕр вĕçĕм ыратнă. Телее, ашшĕ-амăшĕ палăртнă тăрăх – нушаллă çав вăхăт хыça юлнă ĕнтĕ.

Сăваплă вырăна хамăр республикăран кăна мар, Мускавран, Чулхуларан тата ытти хуларан килекен йышлă. Унсăр пуçне Англи, Америка çыннисем те çак шыв хăватне туйса курнă.

Алексей атте хĕрес çакманшăн ятласа та илчĕ. Тĕрĕсех, çынлăх йĕркине пăхăнса пурăннине кăтартма вăтанмалла мар.

Апла-и, капла-и, «Чирлĕ çав çын сывалнă, унăн пурнăçĕ йĕркеленнĕ» тенине илтес килет. Асамлăх... пирĕнпе юнашарах. Ăна уйăрса илме çеç пĕлмелле.

**Марина ТУМАЛАНОВА.**
Автор сăн ӳкерчĕкĕсем.

ЫРĂ ТĔСЛĔХ

# Ял-йышран ан юл, ялан пĕрле пул

/Вĕçĕ. Пуçламăшĕ 1-мĕш стр./

### Кӳршĕ пулăшăвĕ

Михаил Егоровичпа Зоя Егоровна ĕçчен кӳршисемпе пĕр çăвартан пурăнаççĕ. «Кăçал та Тамара Филипповна купăста, помидор калчисем пачĕ. Унсăр пуçне кирек кама та канашпа пулăшма хатĕр вăл», – юнашар пурăнакан хĕрарăмпа паллаштарчĕ мăшăр. Егоровсен, Трифоновсен теплицисенчи помидор тĕмми те тем çӳллĕш. Хуçисем хĕрелнĕ помидора эрнере темиçе хут пĕрер витре пуçтараççĕ. Хăйсем кăна мар, ачисемпе мăнукĕсем те çисе киленеççĕ ăна.

### Юрай сăри

Ку тăрăхра кашни килте тенĕ пекех хăмла ешерсе ӳсет. Çӳлелле кармашакан ӳсен-тăран аякранах курăнать. Çемье вучахне упракан хĕрарăмсем техĕмлĕ сăра вĕретме пĕлеççĕ. Вăл шăрăх çанталăкра ăш хыпнине ирттерме пулăшать.

Авалхи йăлапа упранакансkерне юрай сăри теççĕ. «Çуркунне нӳхрепе юр тултараççĕ. Сăра пичкине ун çине лартаççĕ. Нӳхрепри юр кĕрчченех ирĕлмест. Çавна май пичкери сăра яланах сивĕ», – ăнлантарать Тамара Филипповна.

### Ялĕпех... çĕвĕç

Пушкăрт хĕрарăмĕсем ялала çĕлеме ăста. Малтан çĕвĕ фабрикинче 100 ытла çын 2 сменăпа ĕçленĕ. Халĕ те халăха кирлĕ хатĕр-хĕтĕрпе тивĕçтерет ку организаци. Шел, çĕвĕ машини умĕнче ларакансен йышĕ самаях чакнă.

Тамара Филипповна фабрикăра ĕçленисĕр пуçне шкул ачисене çĕлеме вĕрентнĕ. Пĕлни алă çумне сыпăçмасть теççĕ-çке. Ахальтен мар ĕç майне кăтартнăшăн халĕ те тав тăваççĕ ăна.

Урамра йĕри-таврари ӳсен-тăран илемĕпе киленсе утрăм. Ял-йыш тăван кĕтесе хăтлăлатни савăнтарчĕ.

**Марина ГРИГОРЬЕВА.**
Етĕрне районĕ.

# ТЕЛЕРАДИОПРОГРАММА çурла, 11-17

## 11 тунти кун

### 1 КАНАЛ

5.00 «Доброе утро»
9.00, 12.00, 15.00, 18.00, 3.00 Новости
9.15, 4.20 «Контрольная закупка»
9.45 «Жить здорово!» 12+
10.55 «Модный приговор»
12.20 «Сегодня вечером» 16+
14.05 «Добрый день»
15.20 Т/с «ЯСМИН» 16+
17.00 «Наедине со всеми» 16+
18.50 «Давай поженимся!» 16+
19.50 «Пусть говорят» 16+
21.00 «Время»
21.30 Т/с «ЛИЧНАЯ ЖИЗНЬ СЛЕДОВАТЕЛЯ САВЕЛЬЕВА» 16+
23.30 «Городские пижоны» «Викинги» 18+
1.20, 3.05 Х/ф «ДОБРО ПОЖАЛОВАТЬ В МУСПОРТ» 16+
3.25 «В наше время» 12+

### РОССИЯ 1

5.00 Утро России
9.00, 3.20 Т/ф «Порт-Артур. Мы вернулись» 12+
9.55 «О самом главном»
11.00, 14.00, 17.00, 20.00 Вести
11.30, 14.30, 17.45, 19.35 Местное время
11.50, 14.50, 18.05 Вести. Дежурная часть
12.00 Т/с «ТАЙНЫ СЛЕДСТВИЯ» 12+
13.00 «Особый случай» 12+
15.00 «Девчата» 12+
16.00 Т/с «ПОКА СТАНИЦА СПИТ» 12+
18.15 «Прямой эфир» 12+
20.50 Спокойной ночи, малыши!
21.00 Т/с «КОРОЛЕВА БАНДИТОВ» 12+
0.40 «Аллергия. Реквием по жизни?» 12+
1.55 Т/ф «ДВЕНАДЦАТЬ СТУЛЬЕВ»
4.15 Комната смеха

### ЧТВ

**6.07-6.10, 6.35-6.41 Вести-Чăваш ен**
**7.07-7.10, 7.35-7.41 Утро Чувашии**
**8.07-8.10, 8.35-8.41 Утро Чувашии**
**11.30-11.50 Вести-Чăваш ен**
**14.30-14.50 Вести-Чувашия**
**17.45-18.05 Вести-Чăваш ен**
**19.35-20.00 Вести-Чувашия**

### РОССИЯ К

7.00 «Евроньюс»
10.00, 15.00, 19.00, 23.00 Новости культуры
10.20 Х/ф «МОЛОДАЯ ГВАРДИЯ»
13.05 Д/ф «Танец воинов племени водаабе»
14.05 «Линия жизни»
15.10 Спектакль «НА ВСЯКОГО МУДРЕЦА ДОВОЛЬНО ПРОСТОТЫ»
18.05 Звезды нового поколения. Готье Капюсон
19.15 «Острова»
19.55 «Я пришел к Вам со стихами... Андрей Вознесенский и Владимир Высоцкий»
20.50 «Спокойной ночи, малыши!»
21.00 «Олег Табаков. В поисках радости. Театральная повесть в пяти вечерах» Вечер 1-й
21.40 Д/ф «Сквозь кротовую нору с Морганом Фрименом»
22.30 Д/с «Бабий век». «Рождение психоанализа. Русский след»
23.20 Д/с «Счастливые люди»
0.15 Х/ф «АМЕРИКАНСКАЯ ТРАГЕДИЯ». «ПРИЯТНОЕ ОБЩЕСТВО»
1.25 «Мировые сокровища культуры»
1.40 Х/ф «ЗОВИТЕ ПОВИТУХУ. ГЛАВА 1» 16+
2.35 П.И. Чайковский. Увертюра-фантазия «Ромео и Джульетта»

### НТВ

6.00 «НТВ утром»
8.10 Спасатели 16+
8.35 «До суда» 16+
9.35, 10.20 Т/с «ВОЗВРАЩЕНИЕ МУХТАРА» 16+
10.00, 13.00, 16.00, 19.00 Сегодня
11.55 Суд присяжных 16+
13.20 «Суд присяжных. Окончательный вердикт» 16+
14.30 «Прокурорская проверка» 16+
15.35, 18.35 Обзор. Чрезвычайное происшествие
16.30 Т/с «МОСКВА. ТРИ ВОКЗАЛА-7» 16+
19.55 Т/с «БРАТ ЗА БРАТА» 16+
21.50 Т/с «МЕНТОВСКИЕ ВОЙНЫ» 16+
23.35 «Сегодня. Итоги»
0.00 Т/с «ГЛУХАРЬ. ВОЗВРАЩЕНИЕ» 16+
2.00 Главная дорога16+
2.35 Дикий мир 0+
3.20 Т/с «ХОЛМ ОДНОГО ДЕРЕВА» 12+
5.00 Т/с «ТРИ ЗВЕЗДЫ» 16+

### ТВЦ

6.00 «Настроение»
8.10 Х/ф «МЕНЯ ЭТО НЕ КАСАЕТСЯ» 12+
10.00, 11.50 Х/ф «ПОРОКИ И ИХ ПОКЛОННИКИ» 16+
11.30, 14.30, 17.30, 22.00 События
14.50, 19.30 Город новостей
15.10, 21.45, 1.15 Петровка, 38 16+
15.25 Д/ф «Братья Нетто. История одной разлуки» 12+
16.15, 17.50 Х/ф «ИНСПЕКТОР ЛИНЛИ» 16+
18.25 «Право голоса» 16+
19.45 Т/с «СЧАСТЛИВЫЙ БИЛЕТ» 16+
22.30 «Ракетоносцы. Поход за угол» 12+
23.05 Без обмана. «Вечная свежесть. Реанимация» 16+
0.00 События. 25-й час
0.20 «Футбольный центр»
0.45 «Мозговой штурм. Стартапы в России» 12+
1.35 Х/ф «ВЕРА» 16+
3.20 Х/ф «ВРЕМЯ СЧАСТЬЯ» 16+
5.25 Линия защиты 16+

### РЕН

5.00, 4.30 «СЛЕДАКИ» 16+
6.00, 13.00 Званый ужин 16+
7.00, 12.00, 19.00 «Информационная программа 112» 16+
7.30, 20.00, 23.30 «Смотреть всем!» 16+
8.30, 12.30, 19.30, 23.00 «24» 16+
9.00 «Военная тайна» 16+
11.00 Д/ф «Армагеддон» 16+
14.00 «Засуди меня» 16+
15.00 «Семейные драмы» 16+
16.00, 17.00 Не ври мне! 16+
18.00 «Верное средство» 16+
21.00, 2.30 Т/с «БОЕЦ» 16+
0.30 Х/ф «ЗАКОН ЗАЙЦА» 16+18+

### Чăваш Наци телекуравĕ

06.00 Д/ф «Все, что было – не исправишь. Раймонд Паулс» /16+/
07.00, 17.00 М/ф «Приключния Рекса» /0+/
07.30, 17.30 Т/с «Сестры по крови» /16+/
08.30 «Сто вопросов к взрослому» /12+/
09.30 Х/ф «Приключения Шерлока Холмса и доктора Ватсона. Король шантажа» /12+/
11.00 «Еда с Зиминым». Кулинарная программа /6+/
11.30 Д/ф «Остановите Андрейченко!» /16+/
12.30 «Час суда» /16+/
13.30 М/с «Симба». Король-лев» /12+/
14.00 Д/ф «Скажи, что не так» /16+/
15.00 Т/с «Генеральская внучка» /16+/
16.00 Д/ф «Внезапное наследство» /16+/
18.30, 23.00 «Республика» хыпарсен кăларăмĕ
18.45 «Ылтăн çŷпçерен» /0+/
19.00 «Эх, юррăм, янăра» /12+/
19.30, 23.15 “Республика”
19.45, 23.30 “По существу” /12+/
20.00, 23.45 «Сто лиц столицы» /12+/
20.30 «Акилбупсер» /6+/
21.00 Х/ф “Приключения Шерлока Холмса и доктора Ватсона. Смертельная схватка” /12+/
22.30 «Утомленный славой» /16+/

### Чăваш Наци радиовĕ

Ĕлĕкренех çарăк организма шлакран тасатакан чи лайăх мел шутланнă. Чĕрĕ тымар çимĕçре 9% сахăр, C, $B_1$, $B_2$, $B_5$, PP витаминсем, А провитамин, хăвăрт ирĕлекен полисахаридсем, стерин /унпа атеросклероза сиплеНĕ чух усă кураççĕ/ нумай. Унри сайра тĕл пулакан япала – глюкорафанин – усал шыçăна кĕрешет. Ку элемент çарăкра тата брокколи, кольраби, тĕслĕ купăстара пур. Тимĕр, пăхăр,



марганец, цинк, йод тата ытти микроэлементпа пуян çарăк. Унра фосфор редисран, йӳç кăшманран ытларах. Кĕкĕрте те /юна тата пӳрери, шăк хăмпинчи чулсене ирĕлтерме кирлĕ/ хăнăхнă ытти пахча çимĕçре тĕл пулаймăн.

Çарăкри магни организма кальци пухма май парать. Пĕвер ĕçне лайăхлатать, ват чулĕсем пуласран, вар-хырăмри пахалăхлă япаласем пĕр вырăнта тăрасран сыхлать. Çавна май холестерин шайĕ чакать. Лизоцим – микробпа вăйлă кĕрешекен япала – тĕрлĕ амакпа, уйрăмах ӳтре тата йăлмака клеткăсенче аталанакан вирусcемпе, кĕрешет. Çут çанталăк антибиотикĕ шутланаканскер кăмпа чирĕсене аталанма та чарать.

Çарăк – сахал калориллĕ çимĕç, унпа ытлашши килограмсем те пухăнмаççĕ. Минерал тăварсем, эфир çăвĕсем сывлăха комплекслă майпа çирĕплетме май параççĕ. Çак тымар çимĕç сурана хăвăрт ӳт илтерет, шăка хăвалать, ыратнине ирттерет тата ытти паха енĕсемпе палăрать.

Çарăк сĕткенне ӳслĕк аптратсан, пыр ыратсан ĕçеççĕ. Сывлăш пӳлĕннĕ чухне те пулăшать вăл, ыйхă килменнине ирттерет, чĕре таппине лăплантарать. Пĕçернĕ çарăка тӳсе шăмă сыппи ыратнă тĕле хураççĕ. Шăл сурнине те вĕретнĕ çарăк шывĕпе ирттернĕ. Çарăкри клетчатка пыршăлăх ĕçне лайăх витĕм кӳрет.

200 миллилитр вĕрекен шыва туранă тымар çимĕçе /пĕр-икĕ апат кашăкĕ/ ямалла, 15 минут пĕçермелле. Шĕвеке талăкра 4 хутчен 1/4-шер стакан е çывăрас умĕн пĕр стакан ĕçмелле.

Çĕр улмипе танлаштарсан, çарăка пĕçерме вăхăт ытларах кирлĕ. Тен, çавăнпах пăл тăтăш çуï куракан çимĕç йышĕнчен тухнă. Иккĕшĕ те вĕсем хырăма чылайлăха тутă тытаççĕ. Анчах çакă мĕн сăлтавпа çыхăннине ĕлĕк уяса тăман. Çĕр улми, крахмал нумайăшне пула, часах ирĕлмест, углеводсем те калори ытларах кӳреççĕ. Çарăкпа «иккĕмĕш çăкăр» вырăнне усă курсан ӳкĕнмелле пулмĕ – вăл яшкара та аванах пиçет, пахалăхлă ытти енĕпе вара çĕр улмине чылай хыçала хăварать. Ăста повар аллинче çарăкран хатĕрленĕ çимĕç деликатеса çавăрнать.



ЭЙ, ТĔНЧЕ!

# Арçын ячĕ кăна…

Мускавра ĕçлесе пурăнакан пĕлĕшĕм Валентина çинчен сирĕн хаçатра çырса кăтартнăччĕ. Ака уйăхĕнче «Амăшĕн чунĕ» ятпа статья пичетленсе тухрĕ. Тивĕçлĕ канăва тухнăскер ывăлне вĕрентсе кăларассишĕнех йывăр ĕçре нушаланать, анчах çакна ачи шута хумарĕ, вĕренме пăрахрĕ. Укçа «тĕксе» панипе кăна диплом илчĕ. Арăмĕ аякра чухне Çемен мĕн хăтланса пурăннине каласа кăтартма шантарнăччĕ, ĕçсене пула алла калем тытмашкăн ниепле те вăхăт тупăнмарĕ. Сăмах патăм пулсан – тытмаллах. Пушшех те иртнĕ эрнере Çемен шутсăр хытă тарăхтарчĕ. Хăй ĕçсе лартни çитмест – манăн упăшкана та эрехпе хăналарĕ. «Пĕччен нисашто ĕçейместĕп», – тет. Иккĕшĕ ир пуçласа каçчен лавкка хыçĕнчи çырмара ларчĕç. Çемене пула хуçалăхра çав кун пурнăçламалли план харама кайрĕ. Пĕр картиш тавăрса типĕтнĕ утă çумăр айне пулчĕ...

Арăмĕ килте çук чухне хайхискер патне юлташĕ персе çитнĕ, «калăм пур» тесе кӳршĕ района илсе кайнă. Унта çурт купаланă-ши, пĕлместĕп. Ĕçлени лайăх-ха. Çав ялта эрне ытла пурăнчĕ Çемен. Кĕске хушăра... тепĕр хĕрарăм тупма та ĕлкĕрнĕ, еркĕнĕ патĕнчех выртса тăнă хайхи. Килтен тухсанах пур арçын та хăйне хусах евĕр туять çав, арăмĕ аякра чухне – пушшех те. «Аюк» темен хĕрарăмсене алăран вĕçертмест Çемен, арăмĕ те ку йăла çинчен пĕлмест мар. Ара, çав ухмах Вальăна йăлтах каласа парать-çке. «Çул çинче çавна лартса килтĕм, тĕмсен хушшине кĕрсе тухрăмăр», – тесе те юриех вăрçтарать. Мĕнле хĕрарăм чăтайтăр куçăн çапла кулнине? Тен, çавăнпа та Валя инçете тухса кайрĕ пулĕ.

Çемен яка çӳрет /арăмĕ тумлантарать/, çăвăнсан-хырăнсан – арçынни аптрамасть темелле. Çавăнпах-тăр ют хĕрарăмсем ун çине пăхаççĕ. Эрех ĕçекеннисен кăмăлне çавăрма кĕленче те çителĕклĕ... Хальхинче те çавнашкалтараххипе тĕл пулнă-ши? Çемен ют ялта иртĕхсе пурăннă хушăра Валентина Мускавран таврăнчĕ. Çĕрĕпе те арçын килте çук, телефонне сӳнтернĕ. Арăмĕ кӳршĕ-аршинчен упăшки çинчен тĕпчесе пĕлчĕ. Чунĕ ырă мара сисрĕ-ши – такси тытса тепĕр района вĕçтерчĕ вĕт. Тар тăкса ĕçлесе илнĕ укçине те çав йĕксĕк арçыншăн шеллесе тăмарĕ. Шыракан тупатех. Хайхи Валя та çынсенчен ыйта-ыйта Çеменпе явăçнă юххан кил-çурчĕ умне пырса тухнă. Вара иккĕшĕ пуçланă ниме тăман çав арçынна пайлама! Тĕк-çăм аванах вĕçнĕ терĕç. «Эсĕ – тискер хĕрарăм, сана упăшку юратмасть, ăна вырăн çинче тивĕçтерейместĕн...» – мĕнле кăна сăмах илтмен Валя хăй пирки. Хапха умĕнче кĕтсе ларнă таксие ларма çав-çавах ӳкĕте кĕртнех упăшкине. Ерĕшки тем пекех Çемене хăйĕн патĕнче хăварасшăн пулнă имĕш. Леш, юрату пекки, çуралнă тет-и вĕсен хушшинче? Анчах Валя хăйĕн «харпăрлăхне» çăмăллăнах тепĕр çынна параканскер мар. Хальхи вăхăтра йĕркеллĕ арçын ăçтан тупăн? Ватлăха пĕччен никамăн та ирттерес килмест. Çавăнпа та йăлтах каçарма хатĕр вăл. Лешĕ юлхавланма юратать, хуçалăхри ĕçсем патне çыпăçсах каймасть. Кун пек чухне çынна укçалла ĕçлеттерет Валя. Нӳхрепрен çĕр улми кăларма та, çутă пралукне улăштарма та кӳрше каçать. Выльăхне халĕ усрама пăрахрĕç-ха, ун чухне кĕтӳ черетне кайма та çын куçĕнчен пăхма тивнĕ. Тĕрĕссипе, арçын ячĕ кăна ĕнтĕ. Эпĕ пулас тăк, çавнашкал арçынна, çĕрĕк кăмпа пек, тапатăп та ывăтатăп... Тепĕр хĕрарăм патне пурăнма куçнăшăн хĕпĕртĕттĕм кăна, савăннипе хайхискерсене туй тумашкăн четвĕрт сăмакун лартăттăм. Анчах Валя – эпĕ мар çав...

**С.ВАСИЛЬЕВА.**
Муркаш районĕ.

АХ, АНЧАХ...

# Канлĕ пурнăç

Ватта юлнă хĕр сахал мар халĕ. Качча каяс ĕмĕчĕ пуçĕсенче пур-ха та, анчах тиркемелли сăлтавĕ тупăнсах тăрать. Чĕнекен патне куç хупса кайиччен, кайран нуша куриччен пĕччен пурăннине нимĕн те çитмест теççĕ-ши? Тусăм Натюш та çаплах шухăшлать, ирĕке хăнăхнăскере юрăхлă каччă çуралман та тейĕн. Вăл тăванĕ халалласа хăварнă янтă хваттерте пурăнать те хуйхă мĕнне пĕлмест. Шалу аван илет, çăмăл машина та туянчĕ пике. Тĕлĕнме пăрахаймастăп унран: хырăмшăн укçа шеллемест Натюш, чи тутлине, чи хаклине туянать. Кайран начарланас тесе укça тӳлесе аэробикăна чупать... Çулсеренех ют çĕр-шыва тинĕс хĕррине канма каять. Илем салонĕ, фитнес, лавкка тăрăх çӳресси – акă унăн пурнăç йĕрки. Ара, кунашкал ырлăха кам йывăр тиевпе улăштарĕ? Тантăшĕсемпе юлташĕсем упăшкипе хирĕçни, укçа-тенкĕ çитсе пымании, ачи-пăчи чирлесе чуна ыраттарни çинчен вĕçĕмех каласа кăтартаççĕ-çке. «Çав нушана курма каяс-и?» – хыпаланмасть Натюш.

Пирĕн ялта Вихтăр ятлă каччă пур. Кĕçех 40-е çывхарать, юрист. Сывлăх кăлтăкне пула /хăлхи илтменнипе аппарат тăхăнать/ хĕрсенчен именет. Кăмăлĕ ырă, сăнĕ-кĕлетки те чипер, арăмне алă çинче йăтса çӳремеллискерех. Пĕччен хĕрарăм пулас тăк хам та ун патне кайса ларăттăм. Вихтăр та, Натюш та хăрахшарăн сая кайса пурăнаççĕ.

Çавсене паллаштарма тĕв турăмăр, сада шашлăк çиме чĕнтĕмĕр. Тĕл пулу умĕн Вихтăр парикмахерские кайса çӳçне кастарнă, ĕçме-çиме туянă. Курха ăна, авланма хирĕç мар хăй тата! Калаçăвĕнче те хумханни сисĕнчĕ. Тупкăч пулнă май туйра кĕпе тăхăнтартасса шантăмăр. Çамрăксем пĕр-пĕрне килĕштернĕшĕн сĕре хĕпĕртерĕмĕр.

«Шăнкăравларĕ-и?» – кăсăклансах тăтăм Натюшран кайран. «Çапла, телефоннe тытаймарăм-ха», – тет хайхискер. Е фитнесра вăл, е руль умĕнче, е ваннăйра... Телефонпа калаçмашкăн каçхине те вăхăт çук, 9 сехетрех çывăрма выртатьмĕн, унсăрăн канса çитеймест, тепĕр кун лӳчĕркенчĕк сăн-питпе ĕçе каясшăн мар. Сăлтав кăна-ши çакă е ватă хĕрсем чăнах та çапла канлĕ пурăнаççĕ-ши? Ача çуратсан, упăшкапа хуняма умĕнче «ташласа» тăрас-тăк ал-ури çыхлансах ларать пулĕ? Çук, тем тесен те чăтаймĕçех çемье пурнăçне ачашскерсем. Тепĕр енчен, Вихтăра пурнăç тути-масине пĕлмен арăм кирлех-ши? «Нуша санпа – нуша курман хĕрарăмпа» тенĕ пек килсе çаврăнмĕ-ши кайран?

Тепĕр пĕлĕшĕм Марине те канлĕ пурнăça çемьепе улăштарасшăн мар. 40-елле çывхараканскер ачапа уçăлса çӳрес выранне... йытă çавăтса çӳрет. Ăратлăскере 8 пин тенкĕпе туяннă, апатне те укçалла илет, вĕçĕмех выльăх тухтăрĕ патне илсе каять чĕр чуна. Йытă тумтирĕ те сутаççĕ тет-и халĕ? Çавсене те тем чухлех туянса тултарнă Марине. Ирхи 5 сехетре те, çĕрле вăрансан та ӳркенмесĕрех урама илсе тухать тăвата уралла тусне. Тепĕр хĕрарăм пепкине те унашкал лайăх пăхмастех. Качча мĕншĕн кайманнипе кăсăклансан: «Лаша тапманха», – хуравлать тусăм. Эпир, лаша тапнисем ĕнтĕ, савнине килĕштернĕ те пĕрлешнĕ, мĕнле пурăнассине пуç тавра çавăрттарса шухăшламан, çиччĕ виçме пĕлмен çав. Ытлашши «ăслансан», тен, пурте ватта юлĕччĕç пуль. Тĕрĕс çын пур-и вăл çĕр çинче? Хамăрăн çитменлĕхсене кăна асăрхамастпăр темшĕн. Юрать-ха, хĕрпе каччă хушшинче юрату çуралать те кĕрен куçлăх тăхăнтартать. Унсăрăн мăшăрланакан та, ача çуратакан та пĕтĕччĕ. Натюшпа Марине юрату авăрне кĕрсе ӳкĕç-ши хăçан та пулин? Е çемье телейне курмасăрах ĕмĕре ирттерĕç-ши?

**Алина ИÇĔМПИ.**

САНĂН ТУСУ ПУЛАМ-И?

Йĕркеллĕ çемье çавăрмашкăн юрăхлă арçынпа паллашас килет. Эпĕ 35 çулта, качча кайман, ача çук, пурнăмалли условисем лайăх. Ыттине тĕл пулсан калаçăпăр.

**ОЛЯ.**

**Телефон номерĕ редакцире.**



ĔНЕНЕТĔР-И Е ÇУК-И?

# Телейсĕр юрату

**Юратуран сиплекен эмел – тепĕр юрату. Анчах та телей кӳмен туйăм тепĕр чухне мĕн пур чуна ярса илет те урăх нимĕн валли те вырăн хăвармасть, çула хуплать. Çĕнĕ юрату шыриччен малтан унран хăтăлмалла. Паллах, ăна чĕререн кăларса ывăтмашкăн пĕртте çăмăл мар.**

Ан манăр, чăн-чăн юрату яланах хире-хирĕçле. Çак чăнлăха ăша хывасшăн мар теприсем. Тем чуль кĕнеке, фильм халалланă хуравсăр та телейсĕр юратăва. Вăл илемĕпе, романтика туйăмĕпе илĕртет-тĕр – хăшĕ-пĕри çавăнпах çак асапа тӳсме хатĕр. Кашнин хăйĕн ирĕкĕ... Юрату – чир тесе ахальтен каламан ĕнтĕ. Çапах та вăй-хала пĕтерекен туйăма ирĕке янинчен лайăххи нимĕн те çук.

Çут тĕнче саккунĕ çавнашкал – пĕр-пĕрне пӳрнĕ икĕ чун тĕл пулсан юрату самантрах çуралать. Нимĕн те пулса иртмесен ют çынна çавăрас тĕллевпе вăя тăккалама кирлех-ши? Хуравсăр юратуран хăвăртрах хăпас тесе тăрăшмалла, урăхла май çук. Анчах хăвна пăхăнман туйăмпа мĕнле кĕрешмелле-ха?

Уйăх тулма тытăннă саккăрмĕш куна /уйăх иккĕмĕш чĕрĕкре/ кĕтмелле. Ку ӳкĕнӳ кунĕ, унăн палли – пушар. Пулни-иртнине, вăл шутра ыратăва та, çулăм çинчи евĕр çунтарса ямашкăн шанăç пур. Ирпе çăвăннă чухне сирĕн çирен мĕн пур япăххине, юттине, кирлĕ маррине шыв тасатни пирки шухăшламалла. Çăмăл апат çинĕ хыççăн тепĕр ирччен хырăм выççи çинчен манма тăрăшмалла, ăша ним те ямасан лайăхрах.

Кун варринче тасату ĕçне пуçăнмалла. Пĕччен юлмалла, хут листи, кăранташ, калем, сăрă е фломастер илмелле. Сирĕн тĕллев – телейсĕр юратăва хут çине сăнласси. Мĕнле пулса тухĕ вăл – ку пултарулăхăртан килет. Юрату историне кун кĕнеки е çыру евĕр çырса кăтартма, чечек пек ӳкерме, кĕлеткесем ӳкерме... юрать. Чи кирли – çак ĕçе пурнăçланă чух эсир хуравсăр хăвăр туйăма калăпланине ăнланни. Вăхăта шеллемелле мар, кирлĕ тĕк сехет те, ытларах та лармалла. Аса илӳсем чуна ыраттарсан – макăрмалла, кулмалла, хурланмалла, туйăма çиеле кăларма тăрăшмалла.

Телейсĕр юратупа çыхăннă мĕн пур туйăма ӳкерчĕке е çырăва куçарса пĕтерсен çурта çутмалла. Хут листине кĕпçе евĕр чĕркесе е тăвата пая хуçлатса тимĕр ывăс çине хумалла та çулăмпа тивертмелле. Ун çине пăхмалла: иртни кĕле çаврăнать, савăнăç кӳмен юрату сирĕнтен яланлăхах каять, телейи валли çул уçăлать.

Кĕле юхакан шывпа чӳхесе ямалла, çунакан çурта çине тинкермелле. Чунра юлнă пушăлăх çутăпа, савăнăçпа, юратупа тулать, анчах вăл унченхи савни валли мар ĕнтĕ, пурнăç, çут тĕнче, сире валли.

Уйăх тулма тытăннă саккăрмĕш кун хуравсăр юрату суранне сиплетех. Иртни çав-çавах хăй пирки аса илтерет пулсан ăнăçлă кун вĕрӳ-суру ĕçне тепĕр хутчен пурнăçламалла.

А.ПАВЛОВСКАЯ

# Çăлтăрлă çамка

*Калав*



**/Вĕçĕ. Пуçламăшĕ 30-31-мĕш номерсенче/.**

Утрĕç хуллен вăкăрсене хăваласа. Çăлтăр çамкана майĕнчен шăлса-ачашласа илчĕ, кĕсйинчен пашалу татăкĕ кăларса хыптарчĕ Миша. – Паян кунта сухаласа пĕтеретпĕр. Ыран акма тухаççĕ. Урпа акаççĕ терĕç кунта. Урпа утмăл кунран кĕрекене ларать, ун çăнăхĕ – çăмах çăнăхĕ. Васкарах акса хăварсан часах вырса-çапса кĕртмелле пулать. Тутлă салма яшки çиетпĕр – çĕнĕ тырă çăмахĕ. Ыраш ĕнтĕ патшалăха каять: салтаксем çĕнĕ çăкăр кĕтеççĕ. Çăлтăр, илтетĕн-и ман сăмаха? Урпине акманха, çăмахне çиесшĕн хыпаланатпăр. Эпĕ вун çичче кайрăм. Çиейрĕн-и çăмахне? Мана та вăрçа илсе каяççĕ пуль. Хăçан чарăнĕ ку вăрçă? Ман çултисене те «шагом марш» тейĕç те тăхлан çумăрĕ çунă çĕрелле уттарĕç. Пинĕпинĕпе вилсе юлнă салтаксен вырăнне çамрăксене тăратĕç. Атя, ĕçлер-ха хальлĕхе, турт суха пуçне, – текелесе ачашласа илчĕ яш вăкăра.

Ытти чух каччă аллине çуласа илекенччĕ Çăлтăр çамка, паян апла тумарĕ, майне ун еннелле тăсса кучченеç ыйтмарĕ, савăннине кăтартмарĕ. Асăрхамарĕ çакна Миша, вăкăр майне хăмăт тăхăнтартма тăчĕ. Тем пулчĕ лешне, пуçне çĕрелле пĕкрĕ: унтан çĕклесе илчĕ те хыттăн сулса ячĕ.

– Ан аташ, – кулса ячĕ сухаç. – Ывăнтăн-и? Ĕнтĕ нумаях юлмасть, паян пĕтеретпĕр. Тĕттĕмлениччен яла кĕретпĕр, – тесе çеç ĕлкĕрнĕччĕ, хытах хăмсарса ячĕ вăкăр пысăк мăкла пуçĕпе, янахран хытах лектерчĕ çамрăка. Ярса илчĕ ăна Миша майракаран.

– Мĕн хирĕлен? Янах шăммине катса ярас тетĕн-и? Тĕк тăр. Хытах ыраттартăн вĕт.

Çав самантра майне тăхăнтартнă хăмăта вăнк! çеç хывса печĕ вăкăр, мĕкĕрсе ячĕ. Хăрама пĕлмен каччă айкки-нерех пăрăнма шухăшламарĕ-ха. Выльăх нихăçан та апла хаярланса кăтартман та ăна.

– Мĕн пулчĕ çак? Куçу хĕпхĕрлĕ, юн анса тăваннă. Сиввĕн пăхатăн.

Кĕç кайри урисемпе Миша çинелле çĕр чавма, ыватма тытăнчĕ хайхискер. Нимĕн те ăнланмарĕ халĕччен унашкаллине курман каччă.

– Итлеместĕн-и вара эс мана? Эп сан тусу-çке. Нихăçан кӳрентерсе курман сана, – майракаран ачашшăн тытрĕ хаярланса кайнăскере. – Чарăн. Лăплан атя. Мĕн те пулин ыратать-и вара сан? – лăпкăнах каласрĕ, хăрама та шухăшламарĕ ним тума аптăранăскер.

Пуçĕпе мĕнле сулса ячĕ хайхи усал выльăх, çамрăка икĕ майракипе çаклатса йăтрĕ те çĕре çаварса çапрĕ. Кăшкăрса ячĕ Миша. Вăкăр майраки шĕвĕр вĕçĕпе сулахай пит çăмартине шăтарсах янă иккен. Юн шĕрлесе анчĕ. Тепре кăшкăрса ячĕ çамрăк. Ун сассине илтсе ытти сухаçăсем чупса çитрĕç, виççĕнтăваттăн вăкăр пуçне михĕ тăхăнтартса ĕлкĕрчĕç, çирĕп кантрасемпе вăкăрăн малти урисене çыхса ячĕç. Лӳпех тӳнсе кайрĕ çĕр çине тем пысăкăшскер. Выртрĕ урисене тăсса. Тĕпĕртетет тăма хăтланса, пуçне унталла-кунталла ыватать, мĕкĕрет. Икĕ ачи яла медсестрана чĕнме чупрĕç. Юхать Миша питĕнчен юн, тытса чармалла мар.

Хĕрарăмсем чупса пычĕç. Эпĕ çитнĕ çĕре Миша шап-шурă шуралса кайса выртатчĕ. Пуçри тутăра салтса питне çыхса ятăм та, туххăм хĕрелсе йĕпенчĕ.

– Ара, мĕн аппаланса тăратпăр çак! Икĕ лаша пур вĕт унта. Пĕри – апат илсе килни. Кӳлĕр пĕрне хăвăртрах, вырттарса каяр Мишăна. Больницăнах леçмелле ăна. Урапа çине хума курăк çулăр, çамрăксем. Васкăр, – тетĕп.

Медсестра килессе кĕтмерĕмĕр, Мишăна урапа çине вырттарса ялалла вĕçтертĕмĕр. Пире хирĕç чупса килекен медсестра сурана çыхса ячĕ. Юн юхма пĕртак чарăнчĕ.

– Больницăна хам каятăп. Тем курса ларăпăр, – терĕ медсестра. Лавпа район центрĕ еннелле вĕçтертĕмĕр. Эпĕ те юлмарăм. Ăнланмарăмăр çиййĕнчех вăкăр мĕншĕн çапла урса кайнине. Арăслан пек сикрĕ тусĕ çине. Мĕн пĕчĕкрен юратса ӳстернĕ ăна Миша, нихăçан кӳрентерсе курман. Пырса чарман пулсан ватсах пĕтеретчĕ-ши çамрăка?

Çапла вĕçленчĕ вăйлă та хитре Çăлтăр çамка ĕмĕрĕ. Пуçне тăхăнтартнă миххе те хывман, çыхнă урисене те салтса яман, ана çинчех çĕçĕ айне тунă ăна. Симĕс курăк çине хурса тирне сӳнĕ, акасуха ĕçĕнче кун кунланисене пĕçерсе çитерме какай пĕтнĕччĕ те, шеллемерĕç пĕр шултра выльăх пуçĕ каталнăшăн. Вĕлтрен яшкипе çеç усраймастăн ĕçри çынсене. Ĕнер тинкĕле пĕçернĕччĕ кăнтăрла – пĕр апата пырать тинкĕле те. Хăйĕн хаяр çилли татрĕ вăкăр ĕмĕрне. Шеллекенех пулмарĕ усал чуна. Усал тенĕрен, чунĕ çеç мар ăна пĕтерекенĕ. Пĕр урине сӳтĕн тума Мишасене пырса панăччĕ те – ура чĕрни хушшине пăта тирĕннĕ иккен. Сисмен Миша вăкăр уксахланине. Е çавăн чухне çеç тăрăнса кĕнĕ пăти. Ури хытах ыратнă пуль ĕнтĕ: калайман чĕлхесĕр выльăх.

Икĕ эрне ытларахран таврăнчĕ Миша больницăран. Çамрăк, хитре пит-куçа самаях ватса хăварчĕ усал выльăх.

– Юрать-ха, куçне тĕртсе шăтарман, суккăр хăваратчĕ, – чылайччен шеллесе пурăнтăмăр хăйне. Çĕвви юлчĕ, паян кун çĕвĕллĕ питлĕ çĕрет Михаил Петрович. Çинçе çип пек çеç çĕвви, анчах паллă.

– Ан хуйхăр. Юратакан хĕр çĕвĕллĕ питлĕ тесе тиркеместь, – теттĕм. – Вăрçăран мĕн тери аманса-суранланса таврăнаççĕ салтаксем: урасăр, алăсăр, куçсăр, хăлхасăр. «Аманса килнĕ салтака килне кĕртмен», – тенине илтмен пĕрре те. Килĕштерсех пурăнаççĕ, юратсах кĕтсе илеççĕ çемйисем.

Тем таран пĕчĕк кашăкпа сыпкаласа пурăнчĕ, апатне чăмлаймастчĕ, çăварне усаймастчĕ Миша.

Вăрçăн вăрăм алли пирĕн яла та çитсе юн юхтарчĕ.

– Хамăн пĕçрен касса илнĕ ӳте саплăк пек çĕлесе хучĕç. Хупларĕç çурăк пите, – каласа паратчĕ Миша больницăран таврăнсан. Вăрçа лекеймерĕ вăл: вĕсем вун саккăр тултарнă тĕле юн тăкăнма чарăнчĕ те, учителе вĕренме кайрĕ.

Çĕр типсе çитиччен тĕплĕн шуратса хăварчĕ колхоз уйĕсене: урпине те, пăрçапа кантăр вăррине те, ясмăкне те акса хăвартăмăр. Çăлтăр çамка çук тесе чарăнса лармарĕ ĕç. Ĕшенчĕ ял, сӳсленчĕ: кам ĕневăкăр çавăтса, кам суха пуç тытса, кам тулли пурак йăтса, пĕрчĕ сапса. Ака-суха ĕçĕ вĕçленнĕ ятпа килсерен ака яшки, пашалу, пăтă пĕçерсе ваттисене асăнчĕç.

– Тыр-пул пĕвĕ – хăмăш пек, пуçĕ-пучахĕ шит тăршшĕ ӳстĕр. Ăшă пилпе, тутлă чĕлхепе калатпăр: выçă килекене тăрантарса ямалăх, сивĕре шăнса килекене ăшăтмалăх пар. Кукăлĕ-çăкăрĕ кĕреке тулли пултăр, уй-хире юратса, ырă сунса ватăсенчен пулăшу ыйтатпăр, пулассине шанса, ыррине ĕненсе вăй хуратпăр, – терĕмĕр.

Ăнса пулчĕ çав çул тырпул.

– Тăшман тарать, – тесе хĕпĕртеттеретчĕç салтаксем яракан виç кĕтеслĕ çырусем...

**САВĂ СĔВЕМĔ**

Любовь СОРОКИНА /ПУРЛУШКИНА/

# Шухăшсем шурă парăс караççĕ

### Шухăшсем

Шухăшсем чуччупа ярăнаççĕ,
Çут ачалăхăма таврăнаççĕ,
Ас илӳ хĕлĕхне хускатаççĕ,
Чи илемлĕ кĕвве вăратаççĕ.
Урамра сивĕ хĕл. Пӳртре ăшă.
Çунакан вут ташлать шухă ташă.
Кăмака умĕнче ман анне.
Шкул сумки юнашар. Ирхине.

Шухăшсем шурă парăс караççĕ,
Уçлăха вирхĕнсе ыткăнаççĕ,
Шухă çамрăклăха таврăнаççĕ,
Ырăран чунăма тыткăнлаççĕ.
Сад пахчи шап-шурах. Çутă каçĕ.
Шыв юхать юрласа. Пĕчĕк каçă.
Тӳпере çăлтăрсем. Çуркунне.
Тинкеретĕп куçран савнине.

Шухăшсем юнашар явăнаççĕ,
Çывăхрах ăш йăва çавăраççĕ,
Вăтанми ăсăма пăлхатаççĕ,
Йывăртан авăра путараççĕ.
Урамра кĕркунне, кунĕ ăмăр.
Чăрăнми пĕрĕхет сивĕ çумăр.
Авăнать тăвălра ват çӳçе,
Пăлхатать çил шуралнă çӳçе.

### Иртет ĕмĕр

– Иртет те ĕмĕр, кунĕсем юлаççĕ, –
Юрлаççĕ чăвашсем кĕрекере.
Çулсем пĕр чарăнми мала чупаççĕ,
Паман ик пурнăç пӳлĕхçĕ пире.
Хур кайăксем ăш кăнтăра вĕçеççĕ,
Сив кунĕ вăтанми кĕрет хĕве.
Шур хурăнсем сар çулçă вĕçтереççĕ,
Шух çил ташши хуллен куçать кĕвве.

Çăка çулçи вăр! çаврака илемлĕ.
Мĕн çырнă-ши унта халь каласа?
Ман чунăма кĕр тунсăхĕ иленнĕ,
Ярасшăн эп ăна хăваласа.

Иртет те вăхăт, кунĕсем юлаççĕ,
Укça парса илеймĕн ĕмĕре.
Сад пахчинче сар кайăксем юрлаççĕ,
Тахçан эпир те пулнă çирĕмре.

Çӳл тӳпери çăлтăрсене шутланă,
Çӳренĕ юрату сукмакĕпе.
Чун савнине куçран пăхма вăтаннă,
Хĕмленнĕ пысăк, çутă ĕмĕтпе.

Таçта инçе мăн пĕлĕтсем йĕреççĕ,
Сив тумламсем çăваççĕ кантăка.
Яш хурăнсем сар çулçă вĕçтереççĕ,
Хур кайăксем вĕçеççĕ аякка.

– Юхать те шывĕ, чулĕсем юлаççĕ, –
Юрланă несĕлсем уявсенче.
Иртет те ĕмĕр, кунĕсем юлаççĕ,
Кайсассăн уçлăха пĕррехинче.

* * *

Кĕç вăхăт сиктерме мăнуксене.
Пуçра тулли шуралнă çӳç пĕрчи.
Чунра вара сип-симĕс çуркунне.
Мĕн ятлăччĕ эс, çамрăк хĕр ачи?
Мĕнех тăвайăн пурнăç йĕркине,
Чечек те кĕр çитсен типет, шанать.
Хăналăха килетпĕр çĕр çине,
Тепри пур – нумай чух çакна манать.
Таса ятпа пурнасчĕ ĕмĕре.
Пуянлăх, чапăм пултăр – сумлă чун.
Чул муклашки ан пултăрччĕ хĕвре,
...Умра каллех вĕр-çĕнĕ тепĕр кун.

* * *

Сулăнчăксем нумай çак пурнăçра,
Яка та тӳрĕ çул пурне пӳрмен çав,
Шух шухăшсем тахçанччĕ пуçăмра,
Тапать чĕрем паян тем
кĕрхилле шав.

Ман çамрăклăхăм – пысăк ĕмĕтсем,
Çунан çунатлă вăйлă ăмăрт кайăк.
Тӳпе таса, кăвак, çук пĕлĕтсем,
Çӳлте вĕçетĕп эпĕ, ирĕк кайăк.

Хыçра ачалăх, юрату юрри.
Пурăнмаллах Турри мĕн чухлĕ пӳрнĕ.
Кашнийĕ çĕр çинче – шăпа чури,
Кун-çулăм çеç ан пултăрччĕ пит йӳнĕ.

* * *

Уçă саспа килетпĕр çĕр çине,
Чан сассипе çак тĕнчерен каятпăр.
Хурлантарса чи çывăх çынсене
Яланлăхах ас илӳре юлатпăр.
Паман ик пурнăç пӳлĕхçĕ пире,
Çакна тепĕр чухне эпир манатпăр.
Таса чунпа кĕтер кашни ире,
Нумай самант этемшĕн пултăр капăр.

Хăналăха килетпĕр çĕр çине.
Вăхăт çитсен унпа сыв пуллашатпăр.
Кулянтаратпăр çывăх туссене,
Яланлăхах ас илӳре юлатпăр.

### Хĕрарăма

Кунсен, çулсен хиври вĕçевĕнче
Пин çуллăхсем хыçа тăрса юлаççĕ.
Мĕнле илемлĕ, пысăк çут тĕнче!
Саккун пĕрре – вилеççĕ, çуралаççĕ.

Пурин пуçламăшĕ çак çĕр çинче
Сăпайлă та илемлĕ эс – хĕрарăм.
Шăнкăрав сассу сар кайăк юрринче
Янрать хирте те вăрманта.
Вăл – ахрăм.

Ăш сăпкари ача – сан телейӳ,
Унти пепке – хĕвел те уйăх, пурнăç.
Юратăву çурхи шыв пек ейӳ,
Самани çеç пулинччĕ вĕçсĕр тăнăç.

Хĕрарăм, мĕн чуль вăрттăнлăх санра!
Эс пулнăран тавра ĕлккен те капăр.
Илем тĕнчи пĕтертĕр сыв мара,
Ума нихçан ан пӳлтĕр хура чатăр.
Патăрьел районĕ.

КУҪА-КУҪӐН

# Сукмак хӗреслесен

**Этемпе тискер кайӑк хутшӑнӑвӗ питӗ хӑйне евӗрлӗ. Чӑн та, вӗсен тӗл пулӑвӗ сайра-хутра мирлӗ вӗҫленет. Ытларах чухне сунарҫӑ ӑна пӑшалран тӗллет-ҫке. Анчах та юлашки ҫулсенче, Инҫет Хӗвел тухӑҫ тигрӗпе леопардне тӗпченӗ май, ҫак хутшӑну улшӑнни, сунарҫӑ сюжетӗнчен пачах та пӑрӑнни сисӗнет. Этемпе тискер кайӑк ансӑр сукмак ҫинче куҫа-куҫӑн тӗл пулни ҫапах та мӗнпе вӗҫленме пултарать-ха?**



### “Леопард ҫӗрӗ”

Леопард та, тигр та – пултаруллӑ конспиратор. Вӗсене, хӑйсен кӑмӑлӗ ҫук тӑк, тайгара асӑрхама та май килмест. Ҫакӑ кӑсӑклӑ: юлашки аллӑ ҫулта тӗнчери чи пысӑк та хитре ҫак кушаксем ҫынна тапӑннӑ тӗслӗх пачах та пулман. Этемпе иккӗшӗн сукмакӗ вара ҫак тапхӑрта пӗрре кӑна мар хӗресленнӗ. Тӗлӗнмелле тӗл пулусем ҫинчен биологи ӑслӑлӑхӗсен тухтӑрӗ Дмитрий Пикунов каласа кӑтартать. Вӗсем тепӗр ӑсчахпа Виктор Коркишкопа нумай ҫул каяллах тискер кайӑксене сыхласа хӑварассишӗн кӗрешӳ пуҫарнӑ. /Коркишко тӑхӑр ҫул каялла вилнӗ. Вӑл тӑрӑшнипех “Леопард ҫӗрӗ” наци паркӗнче ятарлӑ заповедник усӑлнӑ/.

Пикунов тӗлӗнмелле тӗл пулӑва аса илет – 32-ри ӑсчах Виктор Коркишко пӗррехинче тайгара тискер кайӑкпа куҫа-куҫӑн тӗл пулнӑ. Хӗҫ-пӑшалсӑрскер, унтан чӗрӗ-сывах тавӑрннӑ.

### Йытӑ хыпман апат

1987 ҫулхи нарӑс уйӑхӗн 25-мӗшӗ – ҫак кун тигрпа леопарда тӗпчекенсен историне яланлӑхах кӗрсе юлнӑ. Экспедици ахаль кунӗ пулнӑ, ыттисенчен нимӗнпе те уйрӑлса тӑман вӑл. Ӑсчахсем Сихотэ-Алинь тӑвӗсен хушшинче леопард йӗрӗсене шыранӑ. Сасартӑк...

Виктор Коркишко дневникӗнчен:

– Ҫулпа юнашарах ҫӳлевӗҫ йӗрӗсене асӑрхарӑм. Ҫакӑн пирки дневника ҫырса хутӑм кӑна, юнашарах тем шатӑртатни илтӗнсе кайрӗ. Пӑхатӑп та, сӑмса умӗнчех – йӑрӑм-йӑрӑм аяк. Тигр пӗр вунӑ метрта чарӑнчӗ, шӑппӑн икӗ хутчен хӑрлатса илчӗ те... ман енне хускалчӗ. Эпӗ алӑпа сулкалашма пуҫларӑм: “Кай кунтан! Мӗн турӑм эпӗ сана!” Вӑл ҫаплах утать-ха. Ман пата ҫитесси пилӗк метр юлсан чарӑнчӗ. Эпӗ хама алла илме тӑрӑшрӑм. “Киса, эсӗ ӑслӑ вӗт, пысӑк, хитре, вӑйлӑ. Яр мана. Манӑн хӗҫпӑшал та ҫук вӗт”.

Тигр хускалмасӑр итлесе тӑчӗ. Унтан ман енне аякпа ҫаврӑнчӗ. Эпӗ хускалма хӑтлантӑм. Анчах та ҫулҫӑ чӑштӑртатнӑ сасӑ илтӗнсенех тигр хӑвӑрт кӑна каялла ҫаврӑнчӗ, сылтӑм енне пӑрӑнса ман пата ҫывхарма пуҫларӗ. Эпӗ пӗр чарӑнми калаҫрӑм – лӑпкӑн, ачашшӑн. Чӗтрекен чӗркуҫҫие лӑплантарма хӑтлантӑм. Хам вӗҫӗмех ун енне питпе пулма тӑрӑшрӑм. Чӗлӗм мӑкӑрлантарса ярас шухӑш ҫуралчӗ – тен, шӑршӑ килӗшмӗ те пӑрахса кайӗ? Вӑт, мур, шӑрпӑк пӗтнӗ иккен. Тигр пӗр чарӑнми ман тавра явӑнать. Вӑл та пӑлханни сисӗнчӗ. Ҫывхарасшӑн та – иккӗленет. Ҫӗр ҫинчи типӗ турата ҫӑварне хыпрӗ, чӑмласа пӑхрӗ – килӗшмерӗ курӑнать. Эпӗ те ӑнкарса илтӗм – мӗн те пулин пӑрахса памалла. Пуҫри ҫӗлӗке хывса ывӑтатӑп. Кӑшт чӑмласа пӑхрӗ – ку та тивӗҫтермерӗ курӑнать. Сигарет пачкине те шеллемерӗм. Йытӑ хыпман апата кушак ҫиет-и вара?

Вӑл пуҫне ҫӗр ҫумнех чиксе ман патах ҫывхарчӗ, тепӗр утӑм турӗ, сулахай урине... ман ура енне тӑсрӗ. Эпӗ ҫаплах калаҫатӑп-ха, хам вара кутамккапа хупланма тӑрӑшатӑп. Ҫапла ӗмӗр иртнӗ пек туйӑнчӗ. Тӗрӗссипе, виҫӗ минут хытса тӑтӑмӑр пуль иксӗмӗр те.

Юлашкинчен хайхи чӑтаймарӗ. Пуҫне айккине пӑрчӗ, хыҫалалла кӑшт чакрӗ те... выртрӗ. Ку мана ҫирӗплӗх кӳчӗ. Айванла шухӑш та мӗлтлетсе иртрӗ – алла тӑсса ӑна ачашлас килсе кайрӗ. Тигр лӑпкӑнах эпӗ калаҫнине итлесе выртрӗ. Эпӗ вара пуҫа мӗн килет – йӑлт каларӑм: тискер кайӑксене упрасси, вӑл мана тапӑнсан мӗн пулса тухасси ҫинчен... Ара, вӑл мана ҫисе ярсан ӑна хӑйнех кам хӳтӗлӗ-ха? Комплимент калама та манмарӑм. Сассӑм чӗтреме пуҫласанах хама алла илме тӑрӑшрӑм.

Тавралӑх вара тӗттӗмленсех пычӗ. Ҫывӑхра пӗр йывӑҫ та ҫук, тӗмсем кӑна. Эпӗ тигра хамӑн хусканусене хӑнӑхтарма шухӑшларӑм, ҫак тӗллевпе ун еннелле япаласем пере-пере патӑм. Хам вара каялла чакрӑм. Анчах та вӑл эпӗ кашни хусканмассерен ман еннелле шурӗ.

Ҫапла – темиҫе хут. Ҫумра вӑрӑм вӗрен пурччӗ. Ӑна та тигр еннелле петӗм. Килӗштерчӗ пулас, хаваспах чӑмлама пуҫларӗ. Ҫакӑнпа усӑ курса тӑватӑ-пилӗк метр чакрӑм. Анчах пӗр вӑхӑтран вӑл татах ман ҫума пырса выртрӗ. Тата мӗн ывӑтмалла-ши? Кутамккара ҫанӑсӑр куртка пурччӗ. Ӑна кӑлартӑм. Вӑл ӑна алӑранах тенӗ пек туртса илчӗ те айккинелле пӑрӑнчӗ. Эпӗ татах вун пилӗк метр шурӑм, ҫав вӑхӑтра шарф тата алсиш хатӗрлерӗм. Хам вара калаҫрӑм, калаҫрӑм... Ҫакӑ кӑна ҫӑлчӗ пек туйӑнать мана. Пачах тӗттӗмленсе ларчӗ. Иксӗмӗр те пӗчӗккӗн хӑвалӑ уя шуса тухрӑмӑр. Юхан шыв леш енче – ҫул. Эпӗ тем тесен те унта ҫитме тӗв турӑм. Вырӑна лайӑх сӑнанӑ хыҫҫӑн шыв еннелле путӑкпа хӑвӑрт шуса антӑм. Тигр ҫавӑнтах тин ҫеҫ эпӗ пулнӑ вырӑна сикрӗ. Ун еннелле питпе ҫаврӑнса хам мӗн тунине те ӑнланмасӑр кутамккапа хуплантӑм. Чӗр чун сикес умӗн самантлӑха чарӑнчӗ. Темӗнле хӑват пулӑшрӗ-тӗр: ҫурӑмпа каялла чакса-чакса, шӑнса пӑрланнӑ чулсем ҫине пусса, урана та йӗпетмесӗр ҫыран тепӗр енне ҫитрӗм. Тигр шыв хӗррине ҫитсен чарӑнчӗ, ӗҫме пуҫларӗ. Эпӗ аяккарах та аяккарах кайса пытӑм. Юлашки ӳкерчӗк: сӗмлӗхре тигр тӑрать, пуҫне ҫӗклесе эпӗ кайнӑ еннелле тинкерет...

### Пӗрремӗш «калаҫу»

– Пурте Витя Коркишкона кӗтсе ларатпӑр, – аса илет ҫак ӗҫ-пуҫа Пикунов. – Эпӗ иксӗмӗр уйрӑлнӑ вырӑна – шыв хӗррине – кайса пӑхма шухӑшларӑм. Шӑпах хунар ҫутине асӑрхарӑм. Витя килет. Хӑрани паллӑ. Калпакӗ ҫук. “Кайрӑмӑр хӑвӑртрах, – тет. – Тигр халтан ячӗ”. Пурте пухӑннӑ вырӑна ҫитсен вӑл мӗн пулса иртнине каласа пачӗ. Пӗр сехет – ӑнланатӑр-и: пӗр сехет! – тигрпа куҫа-куҫӑн пӗччен иртернӗ. Эпир пурте тӗлӗнсе кайрӑмӑр. Суять-и? Кун пеккине никамран та илтмен. Ирхине ҫав вырӑна кайса пӑхрӑмӑр. Ҫук, улталаман. Юр ҫинчи йӗрсем ҫакна кӑтартаҫҫӗ: ҫын каялла чакнӑ, тигр ун йӗри-тавра ҫӳренӗ... Ҫанӑсӑр куртка та, калпака та, сигарет пачкине те тупрӑмӑр. Ҫак тӗл пулу хыҫҫӑн ӗҫтешсем Виктора пӑшалсӑр ҫӳреме чарчӗҫ, вӑл вара тайгана ҫапах та унсӑрах тухатчӗ.

“Леопард ҫӗр-шывӗнче пурӑнакан” – Виктор Григорьевич ҫинчен юлташӗ Василий Солкин ҫапла каланӑ. Ятарлӑ заповедника Коркишко Молдави университетӗнчен вӗренсе тухсанах килнӗ. Ҫулсем иртнӗ май директора ҫитнӗ.

Солкин каланӑ тӑрӑх, заповедникра тытӑнса тӑракан пулман. Коркишко кӑна “леопардпа пурӑннӑ, унпа пӗр сукмакпа ҫӳренӗ, пӗр ҫӑл куҫран шыв ӗҫнӗ”. Ҫак чӗр чунпа та “калаҫма” тивнӗ унӑн.

Виктор, ун чухне ҫамрӑк специалист, тайгара ҫӗтсе кайнӑ. Кӑвайт чӗртнӗ те унтах ҫӗр каҫма шут тытнӑ. Ун йӗри-тавра шӑннӑ ҫулҫӑсене чӑштӑртаттарса тата хуллен кӑна хӑрлатса темӗнле чӗр чун ҫаврӑннӑ. Каҫ пулнине ниепле те уйӑрма ҫук. Пӑшалсӑр ҫын шӑпах ҫавӑн чухне тискер кайӑкпа пӗрремӗш хут “калаҫу” пуҫарнӑ. Ӑна чакма “ӳкӗте кӗртнӗ”. Мӗн пулса иртнине дневника ҫырса хунӑ та... ҫавӑнтах ҫывӑрса кайнӑ. Ирхине йӗрсене “вуланӑ” та – этемпе тайга хуҫи леопард кӑсӑкланнӑ-мӗн...

Коркишко кандидат степеньне хӳтӗлеме тӑратнӑ ӗҫрен тата Дмитрий Пикуновпа пӗрле ҫырнӑ маршрутран “Инҫет Хӗвел тухӑҫ леопарчӗ” ӑслӑлӑх ӗҫӗ ҫуралнӑ. Каярахпа вӑл бестселлера ҫаврӑннӑ. Инҫет Хӗвел тухӑҫӗнчи ҫак кушак шучӗ сахалланса юлнине тӗнче шӑпах ҫав кӗнекерен пӗлнӗ те. Шӑпах ҫакӑн хыҫҫӑн вӗсене сыхласа хӑварас ӗҫ пуҫланнӑ.

Коркишкошӑн леопард чӑнчӑн юратӑва ҫаврӑннӑ. Заповедникри чӗр чунсене вӑл кашнине пайӑррӑн ят парса тухнӑ. Халӗ леопардсене пӗтӗм тӗнче уйрӑм ятпа чӗнет.

### Пеме юрамасть!

Тигрпа танлаштарсан леопард татах та асӑрханулларах. Унпа тӗл пулма май сукпа пӗрех. Анчах та вӑл ҫапах та ҫул ҫине тухсан вара...

– Эпир пӗр вырӑнта леопарда шута илеттӗмӗр, – аса илет Дмитрий Пикунов. – Шӑпах хӗрарӑмсен уявӗ ҫывхаратчӗ. Юр ҫурӗ. Йӗпе, ҫуркуннехи юр. Пӗччене тухса уҫӑлса ҫӳреме шухӑшларӑм, сӑн ӳкерес килчӗ. Леопард йӗрне асӑрхарӑм – тин кӑна ҫӳренӗ кунта. Сасартӑк темӗнле сасӑ илтӗнчӗ: те тискер кайӑк, те машина кӗрлет.

Фотоаппарата кутамккана хурас тесе пӗшкӗнтӗм кӑна, пуҫ тӑрринчех хӑрушшӑн тем шартлатрӗ. Куратӑп – шӑп ман пуҫ ҫине юман тӑрринчен леопард вӗҫет. Винтовкӑна туртса кӑлартӑм – сывлӑша пеме. /Пикунов – тӗл перес енӗпе спорт мастерӗ, профессионал сунарҫӑ/. Леопардпа тигра пеме юрамасть – саккуна пӑсни пулать ку. Амантма пушшех хӑрушӑ: кушак вӗт – тавӑрать.

Анчах та эпӗ сывлӑша та персе ӗлкӗреймерӗм – леопард пуҫ ҫумӗнченех вӗҫсе иртрӗ. Ҫӗре анса тӑчӗ те... лӑпкӑн кӑна пӑрахса кайрӗ. Турӑҫӑм! Вӑл мана кӗтмен вӗт, апат ҫиме хатӗрленнӗ. Ҫын пынине курсан сасӑ панӑ – эпӗ ӑна илтнӗ, анчах та ӑнланман.

***Аҫи 70 кг, ами 50 кг таран ҫитме пултарать.***

***Хӑвӑртлӑхӗ ҫеккунтра 16-18 метрпа танлашать.***

***8-10 метр вӑрӑмӗш сикет.***

### Тӗл пулсан...

Дмитрий Пикунов пограничниксене ҫапла канаш парать. Унӑн канашӗсем сунарҫӑсемшӗн, кӑмпаҫӑсемшӗн е тайгара ҫӗтсе кайнӑ ҫынсемшӗн те усӑллӑ пулма пултарӗҫҫӗ.

● Кирек мӗнле тискер кайӑкпа тӗл пулсан та хӑвӑра алла илме, лӑпланма тӑрӑшӑр – ан манӑр: вӗсем пурте ҫынран хӑраҫҫӗ.

● Ан тарӑр. Тискер кайӑка ҫут ҫанталӑк ҫапла ҫуратса янӑ – таракана хӑваласа ҫитсе тытмалла. Ку вара ҫынран хӑранинчен те вӑйлӑрах пулма пултарать. Тарнӑ май эсир тискер чӗр чунӑн ҫурисем еннелле те чупма пултаратӑр. Вӗсене хӳтӗлесе вара чӗр чун тапӑнатех.

● Хыттӑн, анчах та лӑпкӑн калаҫӑр. Тискер чӗр чун еннелле питпе тӑрӑр, ҫурӑмпа ан ҫаврӑнӑр. Мӗн калаканне ӑнланмасассӑн та вӗсем интонацие туяҫҫӗ. Хӑраса кӑшкӑрни вӗсемшӗн агрессипе танлашать. Хуҫа пек хыттӑн каланине вара вӑл пӑхӑнатех.

● Тискер чӗр чун ҫӗрле хӑйне хӑюллӑрах ытлакалать. Кӑмӑлне те ирӗке ытларах ярать. Темӗн те пӗлес килнипе кӑна вӑл ҫынна йӗрлеме пултарать, уйрӑмах – ҫамрӑккисем. Ун пек чухне вӗсен тапӑнас шухӑш ҫук.

● Эсир ӑна хӑратмасан, унӑн апатне туртса илме тӑмасан, сирӗн умра сывӑ, маларах аманман чӗр чун пулсан тискер кайӑк тапӑнасси иккӗленӳллӗ.

/«Комсомольская правда»/.




# ВОСХИТИТЕЛЬНЫЙ «ФААМ» ДАРИТ ЗДОРОВЬЕ!

**За жизнь накопили букет болезней. От простатита до артрита. С супругой живём на пенсию, она мучается давлением и ногами. Просим дать совет, чем можно нам в нашем возрасте помочь и есть ли такие средства?**

**Супруги Байкаловы 78 и 72 года, с. Аликово**

Реклама.

Медиками Санкт-Петербурга создан удивительный прибор для людей с "букетом" заболеваний - "ФААМ-1". Особенность этого прибора в том, что "ФААМ" может воздействовать сразу четырьмя наиболее изученными, эффективными и одновременно щадящими технологиями. Судите сами:

**Импульсный ток низкой частоты** - снимает боль и повышает тонус нервов и мышц, улучшает кровоток и способствует рассасыванию рубцов и спаек.

**Магнитный поток** - быстро улучшает обменные процессы, заживляет раны, ушибы, порезы, подавляет аллергические реакции.

**Красный монохромный поток** - эффективно снижает нервное напряжение и улучшает местное кровообращение.

**Вибровоздействие** - нежно делает мягкий массаж и восстанавливает структуру и состав тканей.

По сути, вы получаете помощь сразу в нескольких направлениях, и организм начинает "оживать". Перестают беспокоить скачки давления, исчезает боль и ломота в суставах. Нормализуется сон и нервная система. Повышается иммунитет и ... жизнь становится яркой и наполненной. Как говорится: "И старость в радость, если есть здоровье!".

Радует и простота использования прибора: закрепил, включил и забыл - пусть работает. Подробная инструкция даёт все ответы. Но, может быть, самое важное то, что за столь универсальный и эффективный прибор не дерут "три шкуры". Цена данного прибора сейчас - 2990 руб.

Вот официальные показания к применению "ФААМ-1":

- заболевания и травматические повреждения опорно-двигательного аппарата;
- заболевания периферической нервной системы (остеохондроз различных отделов позвоночника);
- сердечно-сосудистые заболевания;
- заболевания органов дыхания;
- заболевания уха, горла, носа;
- урологические заболевания (простатит).




Закажите **"ФААМ-1"** по телефону: **8(937) 873-52-55, 8(84235)60-100**
(8.00-20.00 время московское)
Закажите "ФААМ-1" почтой: **433504, Ульяновская область, г. Димитровград, а/я "ФААМ", И-20**
Специальная цена "ФААМ-1" до 31 августа 2014 - **2990 р.**
+ 350 р. (доставка по РФ)+ почт. сбор
Блок питания к "ФААМ-1" в комплект НЕ входит. Цена блока - **490 руб.**
Оплата при получении. В заявке укажите ФИО, адрес и телефон.

## ИМЕЮТСЯ ПРОТИВОПОКАЗАНИЯ, ПРОКОНСУЛЬТИРУЙТЕСЬ СО СПЕЦИАЛИСТОМ

Реклама. ИП Пимонов Александр Юрьевич. ЕГРИП 308730226600012. ИНН 730200056249. Рег. уд. № ФСР 2010/07421 от 22.04.10.


## *РЕКЛАМА ТАТА ПĔЛТЕРӲСЕМ*

### ПРОДАЮ

**4.ПЛАСТИКОВЫЕ ОКНА.** Низкие цены. Рассрочка. Замер. Доставка – бесплатно. **Т. 89875766562.**

**5.Блоки керамзитобетонные** 20х20х40, 12х20х40, 9х20х40 пропаренные, гидро-вибропрессованные заводские от производителя – недорого, **цемент, песок.** Доставка. Разгрузка. Без выходных. Кассовый чек, документы. Т. 8-960-301-63-74.

**7.Срубы для бани.** Т. 37-28-74.

**8.Гравмассу,** песок, **щебень,** торф, кирпичный бой, **керамблок, керамзит.** Пенсионерам, уч. ВОВ – скидки. Т. 8-905-199-01-22.

**9.Гравмассу, песок, щебень,** керамзит, чернозём. Т. 89033583021.

**10.Сетку-рабицу** от производителя – более 80 видов, сетку сварную – более 30 видов, **профнастил,** гвозди, **столбы,** проволоку. Изготовление ворот, калиток. **Доставка.** Выездная сварка /генератор/. **Грузоперевозки.** Т.: 68-05-67, 34-70-70.

**11.Гравмассу, песок, щебень, керамзит,** чернозём. Дёшево. Доставка. Т.: 89276689713, 389713.

**15.Кирпич, к/блок.** Т. 89613393363.

**16.СЕТКУ-РАБИЦУ** от производ-ля: чёрную, зелёную, оцинкованную – около 100 видов; **сетку сварную,** столбы, скобы, проволоку, калитки. Доставка. Без выходных. Т.: 683045, 8-937-952-22-11.

**19.Гравмассу, песок,** керамзит, **бой кирпича.** Т. 89033225766.

**20.Сетку-рабицу,** ворота, калитки, заборы; кровля, обшивка домов, **навесы.** Д-ка. Установка. Пенсионерам скидки. Т.: 89022881447, 38-75-74, **metalservis21.ru**

**21.Керамблоки, гравмассу, песок.** Т.: 8-903-345-63-07, 8-917-675-75-28.

**22.ПЛАСТИКОВЫЕ ОКНА.** Замер, доставка – бесплатно. Без выходных. Т.: 89176529694, 89276679588.

**23.Гравмассу, песок, бой кирпича,** щебень. Д-ка. Т. 89061355241.

**24.ГРАБЛИ, косилки, сажалки, копалки,** окучники, опрыскиватели. Доставка. Т. 89278533596.

**28.**Пластиковые **ОКНА – немецкое качество.** Замер, доставка – бесплатно. Скидки. Без выходных. **Т. 89370101054.**

**35.Блоки керамзитобетонные** от производителя. Высокое качество. Низкие цены. Доставка. Документы. **Т. 8-937-386-66-29.**

**48.Керамблоки, кольца** колодезные; всё для **фундамента** – ФБС, бой кирп., бетона, свая, ОПГС, песок. Д-ка. **Т. 89063814420.**

**53.Отруби, зерно,** к/корм, **сахар, мука.** Доставка. Т. 89373916016.

**55.**Пластиковые **ОКНА – немецкое качество.** Замер, доставка – бесплатно. Скидки. Т. 89370124111.

**61.Блоки керамзитобетонные** от производителя. Гарантируем высокое качество. Низкие цены. Доставка. Т. 8-987-673-47-54.

**73.ПРОФНАСТИЛ, металлочерепицу, сайдинг, водостоки.** Скидки. Замер. Доставка. Монтаж. Т. 8-903-322-04-79.

**117.ОКНА Чувашии.** Пластиковые **окна,** железные **двери.** Замер. Монтаж. Скидки. Т. 8-905-028-11-82.

**124.Песок,** щебень, **гравмассу, керамзит,** торф, кирп. бой, **цемент.** Т.: 89033220479, 48-04-79.

**134.Кирпич** любой, **кольца, блоки.** Д-ка манипул-ом. Т. 89033587353.

**172.Гравмассу,** керамблок, **песок, щебень.** Д-ка. Т. 89023277585.

**178.Гравмассу, песок, цемент.** Д-ка. Т.: 8-927-849-76-75, 8-927-849-76-74.

**249.БРУСЧАТКУ,** плитку тротуарную, **керамзит, песок** в мешках. Замер. Доставка. Укладка. Т.: 89033220479, 8-903-358-06-79.

**317.Гравмассу,** песок, **щебень,** керамзит, **навоз.** Дёшево. Доставка. Т. 8-927-850-28-21.

**323.Песок** карьерный, речной; **гравмассу,** щебень, **керамзит,** асфальтную крошку, бетон, раствор всех марок. Недорого. Т. 8-961-340-93-05.

**341.Гравмассу, песок, щебень.** Доставка. Т. 8-903-066-66-30.

**518.Гравмассу, щебень, песок** речной, карьерный; чернозём, глину. Д-ка. Т. 89520269954.

### УСЛУГИ

**51.Бурение колодцев,** скважин, кольца колодезные высококачественные. Доставка. Тел.: 8-927-847-71-43, 8-937-379-00-80.

**152.Бурение скважин** на воду. Т. 89603021293.

**229.Кровля, обшивка домов.** Гарантия. Скидки. Т. 89276687574.

**250.Кровельные, фасадные работы. Монтаж** водостоков. Гарантия. Качество. Т. 89033220479.

**273.Бурение скважин** на воду до 50 м., **чистка старых** скважин. Недорого. Гарантия. Т. 8-906-381-60-37.

**419.Доставка керамблоков, песка, ОПГС** – от 10 до 20 тн. Т. 8-987-673-47-54.

**499.Бурение скважин** на воду. Т. 8-905-198-03-33, 8-987-674-00-30.

**513.Чистка колодцев.** Т. 89613429059.

### КУПЛЮ

**18.Бычков, тёлок, коров,** лошадей. Т. 8-962-599-47-06.

**141.Коров, бычков и лошадей.** Т. 8-960-310-98-78.

**333.Бычков, тёлок, коров, свиноматок.** Т. 89370144997.

**475.Спецтехнику б/у.** Т. 413816.

### РАБОТА

**110.Монолитчики,** плотники, **монтажники,** шлифовщики, **каменщики,** сварщики. Питание, спецодежда. Вахта. Т. 8-925-002-22-38.

### СУТАТĂП

**532.Кивĕ çурт.** Т. 89176514873.


« ХЫПАР »
Издательство çурчĕ" автономи учрежденийĕ

**УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ: ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ИНФОРМАЦИ ПОЛИТИКИН ТАТА МАССĂЛЛĂ КОММУНИКАЦИСЕН МИНИСТЕРСТВИ, ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ИНФОРМАЦИ ПОЛИТИКИН ТАТА МАССĂЛЛĂ КОММУНИКАЦИСЕН МИНИСТЕРСТВИН "ХЫПАР" ИЗДАТЕЛЬСТВО ÇУРЧĔ" ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН АВТОНОМИ УЧРЕЖДЕНИЙĔ**

**Директор – тĕп редактор А.П.ЛЕОНТЬЕВ**

Золотой фонд прессы MMVIII

Чăваш хĕрарăмĕ

**Çырăнмалли индекс: 11515**

**Редактор – М.М.ИЛЬИНА**

**Дежурнăй редактор – М.Р.ТУМАЛАНОВА**

**Хаçата Федерацин çыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникацисен тытăмĕнчи тĕрĕслев служби 2013 çулхи ака уйăхĕн 30-мĕшĕнче ПИ № ФС77-54016 номерпе регистрациленĕ.**

**РЕДАКЦИПЕ ИЗДАТЕЛЬ АДРЕСĔ:** 428019, Шупашкар хули, Иван Яковлев проспекчĕ, 13, Пичет çурчĕ

**ЫЙТСА ПĔЛМЕЛЛИ ТЕЛЕФОНСЕМ:** 55-07-21, 56-00-67, 56-03-54, 28-83-67, 28-85-33.

**Факс:** /8352/ 28-83-70, 56-20-07
**Электрон почти:** hypar@mail.ru

Хаçатри рекламăсăр тӳлевлĕ информаци материалĕсем "Реклама çинчен" Федерации саккунĕн 2 ст. килĕшӳллĕн **"Аталану çулĕпе", "Ят-сум", "Ĕç тата çын", "Самана таппи"** рубрикăсенче пичетленеççĕ.

Пичете графикпа 19 сехет те 30 минутра алă пусмалла, 19 сехетре алă пуснă.
Хаçата «Хыпар» Издательство çурчĕ» АУ техника центрĕнче калăпланă, «Чăваш Ен» ИПК» АУО типографийĕнче пичетленĕ.
428019, Шупашкар хули, И.Яковлев проспекчĕ, 13.
56-00-23 – издательство директорĕ.
Тираж 7761. Заказ 2941.